*Пĕтĕм тĕнчери пролетарисем, пĕрлешĕр!*

# СУНТАЛ

## ҪАНАШ СОЙУСĂН ШУРНАЛĔ

## № 1

ШУПАШКАР. 1926 ҫул

БИБЛИОТЕКА
Чувашпартархива
№ 1303

# СУНТАЛ

1 (19)-мӗш №

1926 ç. Йанвар уйăхӗ.

«КАНАШ» çумӗнҫе тухаҭ.


Л. Сейфуллина.

# Мушиксем Ленин ҫинтҫен калакан йумах.

Столитсăсенҫен, пысăк хуласенҫен катара тăракан пысăк уйес. Ҫухăм шутланă çухрăмсем тăрăх, вăл хăш йут патшалăхран пӗҫӗккӗ мар. Ылтăн тăпри вырăнӗсем пулнă унта, хура тăпраллă çӗрсем, ерех савăҫӗсемпе йашка çăвӗ шăратакан савăтсем, така, сурăх кӗтӗвӗсем, тата ҫапа тухнă оренпур тутрисем тума вӗтӗ, çемçе мамăклă каҫкасем пулнă.

Халăхӗ унăн—ӗлӗкрен пурвакан касаксем, тата Тампăв, Пенсă, Сараттăв, Харккăв, Кӗтеринослав, Воронӗш. По ттавă, Тавритă кӗпӗрнисенҫен куçса ларнă çынсем Тӗрлӗ йенҫен, тӗрлӗ хăвăхусемпе, йăласемпе килнӗ. Тата пӗҫӗк Сакмар шывӗ тăрăх, унтан шалалла та, çеçен хирсенҫе, мăкшă йалӗсем, пушкăртсемпе кăркăссен хӗлле пурăнакан вырăнӗсем сапаланҫăкăн ларса тухнă.

Тӗрлӗ йунлă çынсем, тӗрлӗ йăлаллă пурнăçпа, тӗрлӗ тӗнпе пурăнаççӗ: ҫăн тӗне тытакансем, староверсем, мухаметтансем, суппотнӗксем, тырнӗксем (дырники), скоппӗссем, хлыстсем, тата урăх çектăсем те нумай, правиттӗлствă хӳтлекен тӗврен кунга тарса пыгаппă вӗсем.

Темиçе пин теçеттинлă пуйан хресҫенсем, тата çӗрсӗррисем, «хваттертисем», хăйсем ваҫҫи те пӳрт лартма пултарайманнисем пулнă. Тӗттӗм кӗтес пăвса илнӗ вак интеликентси: пӗр вунă тухтăр, уҫитлӗсем, акрономсем, тата пиплиоттекăрсем, сапаланҫăк пăнҫăсем пек, станитсăсене йалсене кӗрсе ларнă. Пӗтӗм Раççей патшалăхӗн пурнăçӗ çинҫен хаçатсемпе хыпарсем Оренпуртан илсе тăнă. Çав хыпарсем телекраф йупиллӗ аслă çул çинҫи станитсăсене, ылтăн тăпри вырăнӗсене, тата уйес хулине кăна хăвăрт çитсе тăнă. Вăл хула йăвăç хула. Пурнăç тапхăрӗсем унăн пӗр пысăк пушартан теприне çитиҫҫен пыраççӗ. Пысăк пушар хыççăн пӗтӗмпех çӗнӗрен тăвас пулаҭ. Лутраскер. Ҫиркӳ тăррисем, тата тăхăр ӗр вунтăватăмӗш çултанпа кăшкăрма ҫарнă ерех савăҫӗн трупийӗ çӳç унта çӳлелле каçăрăлса тăнă. Хаçат сăмахӗсемпе хыпарсем унта çитсен тӗттӗмлӗх ăшӗнҫе сӳнсе пынă. Уйесри йалсене хуларан, тата Оренпура кайакан пӗр йӗрлӗ ҫукун çулран çӗршер çухрăм йе ытларах та уйăрса тăнă. Хулана та, ҫукун çул стантсийӗсене те çав йалсемпе хутăрсенҫен çеçен хир урлă, çырмасем, сăрглă вырăнсем, пӗҫӗк вăрмансем урлă йал хушшисемпе кайакан тӳрӗ мар çулсем илсе кайнă.

Кашни йал, кашни хуттăр хăйӗн уйрăм тӗнне, хăйӗн йăлине туса пурăннă. Хăйсен кулăкаҭ, йăвăрлăхне ирӗерсе йанă, пӗтӗм Раççейрне мар, кӗпӗрнери ӗçсене те пӗлӗсшӗн пулман. Минисӗтăрсемпе патша çинҫен нимле халап та, ваттисем калависене те асра тытса тăман. Салтакӗсем, çав халап

сене слушпăран илсе килекенĕсем, вĕсене хăварт мана-мана кайнă. Вĕсене çыхăрраххипе, сисĕнмеллийĕпе: земски начальнекĕсем, с аковойĕсем, уретнĕкĕсем çинчен калависемпе улăштарнă. Вырăспа Кермани вăрçине мопилисатсилесси те, февральти революци те кунта, пĕлĕт çинчен тул ӳкнĕ пекех, кĕтмен çĕртен пулнă.

Çемствă лектăрсемпе акитаттăрсем йанă. Анчах вĕсем çил-тăманлă хĕлре пур йалсене, хуттăрсене, хĕлле пурăнакан вырăнсене, çуллахи ĕç вăхăтĕнче пур суха тунă çĕре, утă çулнă, тырă вырнă çĕрсене, тата, вырăнтан вырăна куçса çӳрекен вăхăтра, пур аулсене çитсе çавăрăнма пултарайман.

Нумай та пулмаст тӳрĕ çĕртен хунă хула çулĕсене пин те тăхăрçĕр вунтăваттăмĕш çултанпа тап такăр тавăрлатнă пулин те, çапах та хуларан илсе тухнă çар пуçĕсен, революци правиттĕлĕсен йачĕсем тахçавтанпа шăп тăракан çĕрте чăнах мансăра тухнă. Пирĕн чиркӳллĕ вулăс йалĕнче Керенскипе Ротçанкăна уйăраймав мушиксем пулнă. Хĕрарăмсемпе çамрăксем вара йатсене пĕри те пĕлесшĕн тăраçман.

Анчах пин те тăхăрçĕр вунсаккăрмĕш çулти çил-тăманлă хĕлре польшевиксем хускатни лутра хулана та, пĕтĕм уйесе те хытăн ароаштарса йачĕ. Çав хускатнипе пĕрле „Ленин" йачĕ килчĕ

Килчĕ те, телекраф йупиллĕ аслă çул тăрăх çеç каймарĕ. Хуттăрсемпе хĕлле пурăнакан вырăнсене пырса кĕчĕ. Уйесра пурнакансенчен, йунĕ тăрăх, çителĕхĕ тăрăх, шухăшĕсем тăрăх тĕрлĕскерсенчен, пĕрне те хускатмасăр хăвармарĕ.

Ун çинчен вара, катарискер, пĕтĕм Раççейĕпе те мар, пĕтĕм тĕнчипех палласкер çинчен, çак тĕттĕм, тĕрлĕ халăхлă уйесра халапсем каларĕç. Пуйан касак станитсисемпе йалĕсенче, нумай çĕрлĕ староверсем пуç пулса тăнăскерсенче, çектантсем патĕнче, опьă йĕркипе çĕр ĕçлесех пуйма пĕлсе хăйсен аллине уйрăм уйсем, анасем çавăрса илнĕскерсем патĕнче, çав халапсене пысăк çилĕ виттĕр çатнă; ун пек çилĕ пысăк та вăйлă тăшмана курайманнинчен анчах килме пултарнă; вăл çилĕ тăшман вăйне хисеплени пулаĭ. Çектантсем ун çинчен. егем тĕнчинчен пулман хăватлă йапала вырăнне хурса, пипли тăрăх халапсем каларнă Епĕ староверсемпе çектантсем пипли стравитсисене пĕр пăхмасăрах пит хăпартланса кăшкăрса каланине илтнĕ. Вĕсем тискер кайăк числиве,ултăçĕр утмăл улттăва, антихрис числиве Ленин çумне хушаççĕ.

Çектантсен вĕрентекенĕ. хура сухаллă, пăхăнтарма йуратакан мушик, пирĕн ĕлĕкхи вулăс правлени çуртĕнче пулнă пухура, Ленин алă пуснă текретсен чĕл и цирки кăшкăрнă. Иссайи пророк йачĕпе вăл пурне те, уккассенчи кĕсветнĕ сăмахсене асăнакансене, хĕрсе кайса йунанă: Илгмен, тăна кĕмен, темле чăлхе-лĕ халăха урăх кураймăр! тенĕ. Çав кĕсветнĕ сăмахсене вара: Ленивăн, тенĕ.

Тепĕр çектанчĕ ремесли тăрăх сӳсмен (хăмăт) çĕлекенскер, уйес хулинчех пулнă миттĕнкра, кăвакрах, шăртлă кастарнă пуçне хăпартланакаласа, алсисемпе сулласа, турă çырăвĕнчен илсе Ленин майлă кăшкăрнă.—Пуйансенчен тăхка анисене турса илнипе вăл турă çырăвĕ хушнă пек тăваĭ, тенĕ. —Мĕншĕн тесен, хуйхă вĕсене, çурт çумне çурт, уй çумне уй хушакансене, апла тунипе ыттисем валли вырăн йулмаст, çĕр çинче вĕсем пĕр хăйсем кăна пурăннă пек хăтланаççĕ, тенĕ. Ленин çектантшăн таса, чăн çилĕ йатса çӳрекен, Иссайи пророк каласа хăварнисене тăвакан пулнă. Каракай йатлă старовер йалĕнче пĕр тиşшем. хĕрлĕрех сарă çӳçлĕ, аш... тĕнĕпех йулнă кĕршак [1]) Полтĕн та Ленина тӳрă çырăвĕ тăрăх, турă çырăвĕнче çырнисене йышăннă пек. тӳррех, ним шухăшламасăр йышăннă.

Парттийе çырăннă, пăшал çакнă, наканне хутаççине чикмесĕрех çӳреме пуçланă. Кашни пухурах вара, унпа хăратмалла сулласĭ те, Ленин политтĕкккă тĕлĕшĕпе тĕрĕс ĕçленисене кăтартакан турă çырăвĕнчи сăмахсене кăшкăраĭ. Çапла кăшкăрнисенчен, турă тапрашпе Ленина пĕр йĕштерсе тавлашнисенчен уйесра пăтрашса пĕтнĕ анчах чува пит хăпартлантарса йаракан калавсем

---

[1]) Кершек—çектант—КУÇАРАКАН.

ун ҫинҫен нумай каларнӑ. Тӗрлӗ шухӑш-кӑмӑлтан килнӗ вӗсем. Ленин ҫине тӗрле пахнинҫен, авҫах пурте пӗр пек хӗрӳллӗскерсенҫен. Илмиӗ-витӗр уҫӑ шухӑшсем пуҫа ҫӗклентерсе вӗҫсе кӗнинҫен. Никам та хускалмасӑр йулман. „Хвэтгерте“ пурнакан ҫӗрсӗрисем, куҫса ларнӑ сахал ҫӗрлисем, патраксем, ҫухӑн вырӑссем, мӑкшӑсем, пушкӑртсем Ленин ҫинҫен пысӑк йумахсемех хунӑ. Ҫак статйара, Ленин шӑтӑкне питӗрреймен сехетре [1] хыпаланса та лӑ кӑн ҫырмансерге, епӗ нумайах аса илме пултараймастӑп Ун ҫинҫен хамӑн шухӑшсене те ҫырмастӑп. Епӗ тӗттӗм уйес ҫинҫен ҫыратӑп. Ҫав уйесра патсем пӗр пӗр ҫӗре хӗсӗнсе ларса, сӳнсе пывӑ Ҫав уйесра вара сасартӑк акӑ пӗр пысӑк йат йулҫӗ. Йулҫӗ те, мушикӗн шухӑшӗ хӑпаргланнипе тӗлӗнмелле сарӑлса карӗ (ун пек шухӑш хӑпартланасси мушикӗн сайра пулат). Тӗрӗсрех те лайӑхраххӑн епӗ пӗр калавне аса илетӗп.

Хутӑрта, хулана кайнӑ ҫух, илтрӗм епӗ ӑна. Ҫӗр хӗрӗх ҫухрӑма пин те тӑхӑр ӗр вунсаккӑрмӗш ҫулти ҫил-тӑманлӑ хӗлре, ҫӗнӗ хыпарсем илме Минушӗх Мӗкӗти хулана карӗ Хайпе пӗрле мана та илҫӗ. Пӗҫергсе илекен сивӗ ҫил, тата пите ҫапакан йур пире тӗттӗм пулиҫҫенех ҫӗр выртма ҫавӑрмалла турӗҫ. Минушӗхӗн паллаканӗсен пӳртӗнҫе, ҫ риклетсе тӑракан йӑвӑҫ кровӑтне сӗтел патӗнҫи йӑвӑҫ пукансем ҫинҫе, симӗсленсе пӗтнӗ сӑмавар умӗнҫе, ҫул ҫинҫен ҫаврӑнса кӗнисем нумайӑн пулнӑ Вӗсем те хуҫисен паллаканӗсем. Вӗсем те хулана ҫӗнӗ хыпарсем илме кайаҫҫӗ, тӑман вӗҫтерсе лартнӑ ҫулран та хӑрамаҫҫӗ. Тӗттӗмлениҫҫен пӗр-пӗрне мушикле куҫӗсемпе вӑр тӑн пӑхкаласа илҫӗҫ. Тӗл пулсассӑн, вӑли еле, йалан калаҫмалли тырӑ хакӗсем ҫинҫен, таварсем ҫукки ҫинҫен калаҫрӗҫ. Анҫах таса мар мушик тумтирӗн шӑршипе, пӗҫӗк пӳртре ҫыхӑнса ларнӑ ҫынсем сывланипе маҫҫа ҫумӗнҫи пӗҫӗк лампӑ ҫути тӗксӗмленсе лӗп лӗп сикме пуҫласан, хӗрарӑмсем сӑмахха йаҫрӗҫ. Кӑвак сӑнлӑ типшем хуттӑр арӑмӗ, пуҫсыххи айӗнҫен тухса кайнӑ ҫӳҫӗ кӗлӗ пек кӑвакскер, наҫарлана пуҫланӑ хура куҫлӑскер, сывӑрманнисене Ленин ҫинҫен йумах каласа паҫӗ. Йелле Ленин а патша халӑх валеҫни:

Акӑ пӗрре Микколашкӑ патша патне унӑн ҫи аслӑ йанралӗ пырат — Ҫапла, ҫапла, аслӑ патша, тет.—тахӑш ҫӗрте, тахӑш патшалӑхра пур наукӑна вӗреннӗ, пурне те пӗлекен ҫын сикке тухнӑ. Мӗнлескерӗ мӗнле ҫинӗ паллӑ мар, паспартсӑр. хушамаҫӗ Ленин. Акӑ хӑратат ҫав ҫын: Микулай патшана тапӑнатӑп, патшан пӗтӗм салтакне пӗр сӑмахпах хам алла илетӗп, пӗтӗм йанралӗсене, наҫҫальникисене, офицер-плахорогисене, тата сана та, Микулай патша, тӗпренҫ к туса тӑкатӑп, ҫилпе вӗҫтерсе йаратӑп, ҫавӑн пек ҫӗлхе пӗ етӗп епӗ, тет. тет йанрал. Хӑраса ӳкнӗ ҫавӑнтах Микколашкӑ патша, урисемпе сиксе илнӗ, аллисемпе шарт ҫапнӑ, хытӑ сасӑпа кӑшкӑрса йанӑ: ҫасрах ҫырӑр ҫав ҫын патне, мӗнлескерӗ мӗнле ҫинӗ паллӑ маркерне, хушамаҫӗ Ленинскерне. ун пек ҫӗлхепе ан килтӗр мана ҫине, тӗпренҫӗк ан тутӑр мана мӑнӑн йанралсене, наҫҫальниксене, офитсер-плахорогисене, ун вырӑнне епӗ вӑл ҫынна хамӑн ҫурпатшалӑхӑма парӑп! тенӗ. Питӗ питӗ хӑвӑрт, хашкаса, ҫупса тулнӑ ҫавӑнтах патша патне вӗреннӗ ҫынсем, сивӗҫ перисене шӗвӗртнӗ, ҫырса йанӑ ҫав Ленин патне: ҫапла, ҫапла. ан кил есӗ, Ленин, Микулай патша ҫине хӑвӑн ҫӗлхӳпе, ил хуна Микулайӑн ҫурпатшалӑхне ҫапӑҫмасӑр, вӑрҫмасӑр, тенӗ. Сахал и, нумай и вӑхӑт иртет, ҫасах ҫырупа хирӗҫ таварса йанӑ ҫав ҫын, мӗнлескерӗ мӗнле ҫинӗ паллӑ марскер, паспартсӑр, хушамаҫӗ Ленин. Акӑ ҫырат Ленин Микколашкӑ патшана: ҫапла, ҫапла, тет, килӗшетӗп епӗ, Микколашкӑ патша, санран ҫурпатшалӑхна илмешкӗн. Анҫах санпа йеплӗ калаҫмаллине ҫырса пӗлтеретӗп Купирсем тӑрӑх та, уйессем тӑрӑх та, вуласем тӑрӑх та мар Ҫыратӑп епӗ сана. йеплӗ санпа калаҫма килӗшнине, урӑх ним те калаҫмалла ан пултӑр. Пуҫтарса ил есӗ хуна наҫҫи. Микколашкӑ патша, пӗтӗм шурӑ шӑма: йанралсене, наҫҫальниксене, офитсер плахорогисене, пӗтӗм хӑйсен паллисемпе, пӗтӗм ҫинӗсемпе, хӗрес семпе, парнеллӗх панӑ аппулеҫ семпе, ырӑ тавраш майрисемпе, вӗсен шуршӑмаллӑ аҫисемпе. Хоспотин улпутсене пӗтӗм вӗсен пуйанлӑхӗпе,

[1]) Ку статйана Л. Сейфуллина Ленин вилнӗ вӑхӑтра ҫырнӑ.—КУҪАРАКАН.

пурçăн та пархат тумĕпе, ылтăнлана кĕмĕл ђашки тиркипе, вĕсен майрисемпе те йăх йăхĕ мĕнĕпе. Пуçтарса ил хуна вађђи купсасене вĕсен таварĕсемпе, шуђĕ йĕрĕсĕр ук ипе, панккăсенђен те хăйсен укçине пĕтĕмпех илсе кайђăр. Пуçтарса ил хуна вађђи пĕтĕм савăт хуçисене, укçисемпех, машшинĕсемпех, пĕтĕм савăт пуйанлăхĕпе. Мана пĕтĕм хура шăммине пар: мушиксене, салтаксене, хапрăк çыннисене, вĕсен пахах мар кĕтĕр катĕрĕпе. Пĕр выђăх ђĕрлĕхе кăна йăхлăх хăвар, курăк уйĕсем, тата сухаламаллăх тăрантаракан çĕр йултăр, тет. Вуласа тухнă çырăва Микколашкă патша, урисемпе таптса йана хĕпĕртесе, алă çупнă савăнса, хушса вара хăйĕн йанралĕсене, офитсерĕсене, нађђалђниккисене: ха-ле-х çырса йарăр çав Ленин патне пурне те пĕтĕмпех вилĕштерни çинђен. Мĕнле-ха тата, вăл, манăн шуттйĕрĕсĕр укçама, купса таварĕсене, улпутсем хатĕрлесе хунисене илмесĕр хăйне хура шăмă пĕр хатĕрсĕр илет пулсассăн, пур науккăна вĕреннĕ, ђĕлхе пĕлекен пултăр. Çав укçапа епĕр урăх шăмă тытăпăр, çав тытнисенђен салтака илĕпĕр, каллех каялĕ те пуйан пурăнма пуçлăпăр, тенĕ. Питĕ питĕ хăвăрт, хашкаса, ђупса тулнă çавăнта патша патне каллех нумайăн вĕреннĕ çынсем, çивĕђ перисене шĕвĕртнĕ, çырса йанă çав Ленин патне патша килĕштерни çинђен. Анђах мăшкăласа кулнине çырăвĕнђе асăрман та, хăй шухăшне пăрахма ан шутлатăр, хăй ђĕлхе пĕлнипе вĕсем çине тапăнса ан килтĕр, тесе. Сахал-и, нумай-и вăхăт иртет, ђасах сисĕнкĕсĕр йăпăштăн Ленин хăй салтакĕсем, мушикĕсем, хапрăк çыннисем патне пырса кĕрет. Патша шурă шăммипе айакналла кайса та тăнă. Пăхаççĕ мушиксем, салтаксем, хапрăк çыннисем—вĕсем патне ахађ хресђен çинниййех пынă та, калаť: Сывă-и, йулташсем! тет. Куç курнă таран пурне те алă тытса тухаť, хытă сасăпа çапла пĕлтерет: Епĕ сирĕнпе пĕрешкеллех пулатăп, халĕ йулташсем пулнă пекех. Анђах есир мана итлĕр, елĕ пур науккăна вĕреннĕ, хам йулташсене те усала вĕренгмĕп, тет. Салтаксем, хăйсем салтакла калама вĕреннĕрен, çавăнтах: Ђăн çапла, йулташ Ленин, итлетпĕр, тенĕ. Хапрăк çыннисем, хула халăхĕ, хут вĕреннĕскер, ĕçе ђухлаť, вĕсем те ăна хирĕç каламан. Анђах мушиксем, шутланă ђух вăл йăнăшнă, тесе çиленнĕ. шавласа, карласа йанă, хускалса кайнă: Мĕншĕн, мĕн пирки укçана, шуђĕ йĕрĕсĕр пуйанлăха аллувтан вĕçертсе йатăн? Валеçсе параcђĕ те пире, епĕр хуçайствăсене тŷрлететтĕмĕрђĕ, тенĕ. Кулса йанă çавăнта Ленин, пуçне сулнă та, çапла каланă вĕсене хирĕç: Ан шавлăр, ан ŷпкелĕр, çĕре, выђăха алла илĕр те, хуçайствă тытса пурăнăр. Çав укçа сире çитес çукђĕ, мĕншĕн тесен есир нумай пинтерĕн, шурă шăмăсем çĕршерĕн кăна. Лешĕн пирки, пĕтĕм шурă шăма çут тĕвђерен шăвăнтарас пирки епĕ ђĕлхе пĕлетĕп, халĕ пĕтĕмпех мар ха. Пăртакçă тавçăрса çитерейменĕм. Анђах епĕ тепĕрне пĕлетĕп, çĕр çинђи пĕтĕм хура шăмăшăн шанђăклине. Ăна каласассăнах, шурă шăмă салтак та, ĕçлекен те ниçта та тŷпаймĕ. Пурте ман алла килеççĕ, вĕсене пăрахаççĕ. Вĕсем ĕçлесе тупаканĕсем мар, пĕтерсе пыраканĕсем, çавăнпа та вĕсем çут тĕвђере нумай тытăнса тăрас çук, тенĕ. Сахал-и, нумай-и вăхăт иртет, ђасах, каланă пекех, çаплах пулнă. Систертсе çитнĕ йуланутлăскер Ленин патне, хыпар илсе килнĕ ун вађђи Микколашкă патшаран. Çапла, çапла, тенĕ лешĕ, лартрăн есĕ мана, туп аканĕсене мар, пĕтерсе пурăваканĕсене патăн. Йанралсем манăн, офитсер-плахоротисем, витере тăракан утсем пек, хамăр салтаксемсĕрех. Ĕçеççĕ анђах, çиеççĕ те самăрланаççĕ. Хоспотин улпутсем пĕтĕм хăйсем хатĕрлесе хунисене пĕтерсе пыраççĕ ĕнтĕ, арђисенђи тумтирĕсене тăкăнса киветеççĕ, ним шухăшламасăр çĕтсе тăкса лапăртаса пĕтерђĕç. Купсасем манăн сутăпа павкрута тухрĕç, мушиксемсĕр вĕсен выртакан таварне никама сутма çук. Савăт хуçисем манăн пĕтĕм машшинĕсене ватса пăсса пĕтерђĕç. Вĕсен ђухлани çук, кĕнеке тăрăх кăна пĕлеççĕ, винт çине винт шайлаштараймаççĕ. Йутри хуращăмлă халăх пирĕн пата слушпăна кĕрĕшмест, сан пата, сан ђĕлху хыççăн пыраť. Çавнашкал пулсă çитрĕ пирĕн ĕç, хуť вырт та вил, çавăнпа та, пĕтĕм хура шăма кайалла хамăра туртса илес тесе, йанралсем манăн, офитсер плахоротисем сана хирĕç вăрçăпа пыраççĕ, тенĕ. Çавăнтан халĕ шурă шăмăпа хури хушшинђе вăрçă тапранса кайнă. Анђах шурри нумай тытăнса тăраймĕ, йанралсем, офитсер-плахоро-

тисем вӗсем салтаксене кӑшкӑрса комавтӑ пама, ҫарӗсене унта кунта куҫарса ҫӳреме вӗренне, хӑйсем вӑрҫӑра вӑрҫма хӑнӑхман, мӗншӗн тесен вӗсен шӑвӑрӗ ҫинҫе. Ҫавӑнпа ҫут тӗвҭере вӗсем нумай тытӑнса тӑраймӗҫ... тесе пӗтерҭӗ хуттӑр арӑмӗ.

Лампӑ сӳнсе ларҭӗ. Харлаттарса ҫывӑраҫҫӗ мушиксем. Мӑкӑртатса илҭӗ айхӑ тӗлӗшпе пӗр хӗрарӑм. Ватӑлакан типшем хуттӑр арӑмӗ, хӑй тӑлӑпӗ ҫинҭе, урапӗнҭе ларса, хӑй йумахӗн кулӑшла та кӑмӑла ҫемҫетекен сӑмахӗсене, кӗлӗ каланӑ пек, пит тӑрӑшса, шӑрантарса каларӗ. Унӑн хушса каланисем, ҭакса каланисем пулнӑ, вӗсене епӗ астумастӑп. Сӑмахӗсене те тӗрӗс астумастӑп, анҭах сӑмахӗсем мӗнлине, мӗн ҫинҭен каланине, унӑн халаппи мӗнле тухса тынине епӗ астӑватӑп. Хаҭ калавӑ пекех илтетӗп. Ҫавӑнпа та хӑйуллӑн калатӑп. Ҫак—нумай йатсем сӳне-сӳне кайнӑ, лекентӑсем тӗлӗшӗнҭен ҭухӑн уйесра—Ленин йатлӑ ҫын ҫинҭен мушиксем кӑларнӑ малтанхи лекентӑ пулат̆. Мавшӑн вӑл мушиксен хытӑ ҭунӗ Ленина ӗненнине лайӑх кӑтартат̆. Мушик хӑй ҭӗрине, хӑй пуҫне ҭӗрӗ картгинӑн кӗнӗ йапала ҫинҭен, хӑй мӗне ӗненни ҫинҭен анҭах халапсем калат̆. Ҫавӑнпа та хуйхӑлла сехетре епӗ унӑн ҫӑмӑл йумахӗн кулӑшла сӑмахӗсенҭен хӑрамастӑп. Шел тата,—тепӗр пушкӑрт лавӑҫ каланине аса илейместӗп. Унӑн сӑмаххисем йепле ҫыпӑҫнине, мӗн ҫинҭен, тата йепле каланисене пурне те лайӑххӑн аса илес пулат̆. Ӑна епӗ халӗ тӑваймастӑп. Вӑл хӗрлӗ тӳре Ленин ҫинҭен, пушкӑртсене вырӑссем хытӑ тытнипе вӗсен ҭейелӗхӗсенҭен сыхлакан ҫинҭен каланӑҭҭӗ. Тӗрлӗ халӑх пурӑннинҭен уйесра ҭас ҭасах хирӗҫӳсем, хӑш ҭух йунлӑ ҫапӑҫусем те туха туха кайнӑ. Пӗр пекех тӗттӗм, пӗр пекех усал вӗсем. Нумайҭҭен хирӗҫсе пурӑнни халӗ те пӗтмен ха. Вӗренни, тата унпа пӗрле тӗрлӗ тӗнлине, тӗрлӗ йунлине хисеплесси килсессӗн тин пӗтет вӑл Ҫак уйесра халӗ те кӑркӑс ҫынӗ, пушкӑрт ҫынӗ нумай вырӑс хресҭенӗсемшӗн—йӗрӗнҭӗк йапала. Вӗсем пӗр ҭашкӑран ҭирлипе пӗрле ӗҫеҫҫӗ, анҭах пушкӑрт хыҫҫӑн йӗрӗнсе савӑтне айаккалла тӗртсе лартаҫҫӗ. Анҭах Ленина лешсем те, кусем те ӗненнӗ. Епӗ пуҫламӑшӗнҭе уйес ҫинҭен тӗпӗ йӗрӗпе ҫыртӑм. Октапӗр тӑвассишӗн унта йепле хытӑ, йепле усаллӑн кӗрешни ӑнланмалла пултӑр, тесе. Хӑш йалсем шуррисенҭен хӗрлисем патне пилӗкшер, ҫиҭӗшер хут куҫнӑ. Нумай хуттӑра ҫӗр ҫинҭен пӗтӗмпех шӑлса тӑкнӑ Станитсӑсем ҫунса, ҭухӑнланса кайнӑ, тапганса пӗтнӗ, староверсен пуйан ҫӗрӗсем шуралмасӑр выртаҫҫӗ. Ҫурри ишӗлнӗ уйес хули вилме пуҫланӑ. Ҫак ҫулла епӗ унта, уйес йалӗсенҭе пултӑм. Хулари лап вырӑнсене, сайра троттуарӗсене курӑк пусса ларнӑ. Сурҭӗсем, виҫҫӗмӗш пайӗнҭен сахал мар, ванса пӗтнӗ. Шкулсем ҫӗмрӗк. Хулан вӗсене йусамашкӑн укҫа ҫук. Унта суту илӳ ҭӑрӗлеймерӗ. Мӗн тӗл пулнӑ тавӑрпа пӗр коопертатив лапки сутӑ тӑвать. Пушкӑртсен хӗлле пурӑнакан вырӑнӗсенҭе нумайӗшӗнҭе пӗр кӗл кӑна. Вӑрҫӑн хайар лаппи ҫав уйесра пит палӑрса йулнӑ. Утлӗсем нушта курса пурӑнаҫҫӗ. Йалсенҭе мушиксем шкулсене хупа хупа пӗтернӗ. Вӑрҫӑсӑр пуҫне, уйеса тата выҫлӑх таптаса лартнӑ. Атӑл тӑршшинҭи пекех, ҫав ҫулах выҫлӑх пулнӑ. Акӑ ҫав уйесра, тӗрлӗ ушкӑн пырса ҫапӑнвӑскерге, тӗнҭе ҫине тӗрлӗ пӑхакан ҫӗрте, йӑвӑҫрак тунӑ тӗттӗм мешҭен хули касаксем икӗ уйӑх хупӑрласа тӑнине ҭӑтса иртернӗ. Хулана пӑрахса кайнӑ ҭух, халӑх пулӑшни хӗрлӗ салтаксене ҫарӑн ҭи пысӑк вӑйӗсемпе пӗрлешмешкӗн ҫул шӑтарса тухма май панӑ. Ҫак ӗненмелле мар уйес. пӗтӗм октапӗр хӗрӳллӗхне хӑй ҫине илнӗскер, Ленина ӗненессине пӗре те ҫухатман. Лекентӑсемпе ҫав ӗненӳ унта тӗреклӗн ҫирӗплевсе ларнӑ, тем пек йӑвӑр курмалли пулнисем те ӑна пӗтерсе лартман. Ленин ҫинҭен хӑйсен таҭӑ тӑванӗ пек ыйта ыйта пӗлеҫҫӗ. Мускавра пулнӑ ҫын кашнийех Ленинӑн кунӗ мӗнле иртнине тем ҫӑмӑллӑн пӗлме пултарнӑ пек, тӗпӗ йӗрӗпех ыйтаҫҫӗ.

— Ну, мӗнле вӑл унта? Мӗнле пурӑнат̆?

— Тырӑ сайомӗ пирки мӗн калат̆ вӑл?

— Мӗнле-ха Ленин халӗ? Сывалат̆, теҫҫӗ. Тӗрлӗрен апат параҫҫӗ-и ӑна, ҫук-и? Мӗн калат̆ вӑл? Йал пирки мӗн халаплат̆?

— Хӑйӗн ҫемйине куртӑр и есӗр?

— Акӑ Ленина пӗлтермеллеҭҭӗ. Вӑл тӗрӗс каласа парат̆, теҫҫӗ.

Ахаҫтен ыйтса пӗлесшӗнни те ҫавӑн пек ыйттарма пултарнӑ. Ахаҫ ҫейелӗх вӗрентме пултарнӑ. Анҫах епӗ йалта нумай ҫул пураннӑ. Мушик хӑй пуҫӗнҫе хайне шут тытса ыйтни ене епӗ пӗлетӗп. Мушик ҫуралла йапалтагнине ӗлетӗп. Хайне ҫӑнах кирлӗ ҫух ҫӗререн йепле ыйтнине те пелегӗп. Мушик ун пек ыйтнине ҫасах илтеймӗн. Хытӑ питӗрӗнне ҫунӗ унӑн—сыхланмалли хурҫӑ. Унӑн ӑшне вӑл пысӑк ӗневӳ сайра кӳрет Ҫунне сайра уҫать. Лениншӑн уҫнӑ. Пуйан хресҫенсем курайманнинҫе те Ленин парӑнманнине, вӑл ҫухӑнсемшӗн хуҫайства тума тӑрӑшнине ӗненни пулнӑ. Каска пек хытӑ тӑни, тата хуҫайства ҫӗвҫе ҫухлани хресҫеншӗн пысӑк ырӑ йапаласем пулаҫҫӗ. Мушик хӑй ӗненекенне кӑна ҫавӑн пек ыррӑн хисеплет. Пӗр пуйан мушик, комунистсемпе Совет влаҫне вӑрҫмаллах вӑрҫнӑ хушӑра, кӗтмен ҫӗртенех айванла ҫапла каласа хуҫӗ:

— Кӑшни влӑсах пӗрер Ленин пулсассӑнҫӗ!.. Атту пирӗн пӗр... куҫтҫутпайӗ. Мӗнле пултӑр-ха унта? терӗ.

Ҫак тӗрлӗ кӗпӗрне халӑхӗ турткса кӑларнӑ йумах мана пӗтӗм мушикле Раҫҫейе пӗҫӗккӗн кӑтартнӑн туйӑнать. Унӑн Ленин ҫинҫен хунӑ йумахӗсем Ленин йаҫӗ пӗтӗм Раҫҫей «пурнаҫӗн таҫкӑпне» хӗртсе тухнине ҫӑн ҫӑнах кӑтартаҫҫӗ. Пӗлетӗп епӗ,—йалти комунис арӑмӗ ҫиркӳре Ленина асӑнса виртӑн кӗл тутарнисем пулӗҫ, пӗр-пӗр старик, Ленинш ӑн ҫунне уҫнӑскер, Ленин поҫшевик вилнине асӑнса ҫурта лартӗ Анҫах ҫав икӗ тӗн хутӑшса кайнккаллех вӑл авалхи йӑлапа пурӑнакан вырӑс мушикӗ те пӗлмелле мар ҫулсемпе хӑй ӑшне Ленина йышӑннине кӑтартать. Йышӑннӑ, ӗненет ӑна, унӑн вӗрентсе хӑварнисене те йышӑнӗ Ун ҫинҫен ҫӗнӗ калавсем те тухса пыраҫҫӗ. Ватӑ хресҫен хӗрарӑмӗ Мускавра, нумайах пулмасть, йалта вӗсем Мускав мӗнлине, унта «тиатрӑсем» мӗн иккенне пӗлмесӗр пурӑнни ҫинҫен ахаҫ сӑмахсем каласах пӗтӗм сиес кӑмӑлне пысӑккӑн хуҫса йанӑскер, халӗ Мускав ҫинҫен пӗлтӗ, патшаллӑх ый ӑвӗсене сӳгсе йаврӗ, йал йыҫӗпе Ленина „йулашки хуг" ҫуп турӗ. Вӑл йалта Ленин ҫинҫен ҫӗнӗ майлӑ каласа парать. Йал хушшисемпе кайакан тӳрӗ мар ҫулсем тӑрӑх, ҫӳреме майлӑ тракта тӑрӑх унӑн пӗр калавӗ анҫах киймӗ. Историк ҫырнинҫе те пурнӑҫӗ лекентӑ пек йанӑрса тӑмалласкер, мушик ҫӗлхи ҫӑварӗпе калавинҫе те вӑл малашнехи сыпӑксем ваҫҫи питӗ илемлӗн ҫӗрӗлсе тӑрӗ Ҫав мушик калавинҫе ҫӑн йа ала йумах шухӑшласа кӑларнипе йавалансса кайать. Пӗрте пӗрле вара ҫи лайӑх ӗненгермелли ҫӑн йапала пулса тӑрать...

Хумма Ҫеменӗ куҫарнӑ.

---

# Ленин мавсолейӗнҫе.

Хур кайӑк пек карталанса
Ҫӗрет кӗтсе тӑтӑмӑр.
Ҫерет ҫитрӗ Саҫуг парса,
Шӑп малалла утрӑмӑр.
Хуллен хуллен шӑватпӑр,
Ҫамрӑк ҫӗре «карт» сиктет.
Акӑ ҫитрӗмӗр, пӑхатпӑр,
Ленин атте ҫывӑрать...
Кантӑк тупӑка хупӑнса.
Выртать унта куранса.
Електритка ҫуттипеле
Ҫамки тӑрать ҫуталса.

Ах! Вӑл питӗ лӑпкӑ выртать.
Тӑрас пекех туйӑнать.
Ҫук, тӑмарӗ. Ӗмӗрлӗхех
Куҫне хупнӑ курӑнать...
Йерипен утса иртрӗмӗр,
Ленин тупӑк тӗлӗнҫен.
Хуллен хулленех тухрӑмӑр.
Ленин мавсолейӗнҫен.
Тулта тӗттӗм. Уйӑх ҫути
Ҫутатать пӗлӗт ҫинҫен.
Сисейместӗн, ахтомопиҫ
Иртсе кайать пирӗнтен.

Саплах асӑннӑ Ленина
Ӗнтӗ куртӑм пӗр хутҫен!
Ӗмӗр манмӑп. Вӑл кайас ҫук
Манӑн куҫӑм умӗнҫен.

Уйӑп.

**Патман.**

# Мĕншĕн?..

(Ĕлĕкхи пурнăçран илнĕ калав).

Йулашки спасра Мăн-Кушилре ҫирку праçнăкĕ. Аслашшĕсен авалхи йăлипе, Мăн-Кушил çыннисем вăл праçнăка çулленех ҫапла ирттереççĕ. Çуллен çулах Мăн Кушил çыннисем, ҫылай малтан, вăрлăх вақçи тесе çапса хатĕрленĕ тыраран пĕр икĕ пăталкка уйăрса, салат хураççĕ. Спас ыран пайан тенĕ ҫухне, çĕнĕ салатран ăсла йухтарса, пиҫки-пиҫкипе вухрепсене сăра тултарса лартаççĕ. Тăван-хурăнташсен йаҫăпе ырă сунса питравран йулнă ырă такисене, йулашки спасра пуçне çĕмĕрме, киле хăвараççĕ. Пуйансем ҫылай вăйлă ĕçкĕ тăваççĕ, ҫухăнсем те кăшт-кăшт хăна пухкалаççĕ. Пуртараххи ĕçет, çийет, ҫуктараххи ун патне пырса хăнисемпе калаçса ларать.

— Йурĕ-ха кунта та тесçĕ вара ун пеккисем тĕпелерех иртме сĕнсен, —пире шăпăр шăтăкĕнҫе те йурĕ-ха, теççĕ.

Тырă вырса хыгнă шăмшаксем, çемçе сăра ĕçнĕ хыççăн, исленсех кайаççĕ. Сăра хушшинҫе пĕр-ик ҫеркке çуттине те йарсан, çан-çурăм та хĕрсе кайать.

— Ма ĕçес мар праçнăк йаҫĕпе? теççĕ Мăн Кушил çыннисем.

— Ма савăнас мар çĕнĕ тырă кĕрекене кĕнĕ майпа? теççĕ хăнисем.

Çапла вара Мăн-Кушилре ватти вĕтти, арçынĕ хĕрарăмĕ ĕçет, çийет, савăнать,—турамĕш йаҫĕпе лартнă ҫирку праçнăкне асăнать, çĕнĕ тырра çăвара илнĕшĕн хĕпĕртет.

Çуллен çулах Мăн Кушилре йулашки спас кунĕ каç йенне кайсан килрен киле йурă сасси илтĕнет. Хăйă çутти урам урлă йарлатса выртсан ĕçкĕ тата хĕруленсе кайать.

Тăванпа тăван калаçса лараççĕ, ваттисем авалхипе супĕлтетеççĕ, хĕрарăмсем йурлаççĕ—пурте шавлать, пурте савăнать. Çуллахи кĕске çĕр те вара куç хупмасăрах иртсе кайать.

Çапла ирттереççĕ Мăн Кушилре ҫирку праçнăкне.

* * *

Пуйан Мирун пайан хăна пухасшăн. Хăнасем килиҫҫен кил-картинҫи ĕçсене пуçтарса пĕтерес тесе, вăл çутăлнă-çутăлман ура çине тăнă. Хăй тăрсанах лупас айĕнҫе урапа çинҫе çывракан тарçине тăратма кайрĕ.

Тарçи исленсе кайса çыварать. Йăвăр ĕçпе çĕмĕрĕлнĕ çамрăк шăм-шаккисем шалтăрах кайнă.

— Çтаппан, тăр ҫасрах!

Çтаппан илтмест. Çĕтĕк ҫаппан айĕнҫе, măш-мăш, сывласа выртать.

— Çтаппан! тет Пуйан Мирун тата хытăрах. Çтаппан татах илтменнине кура айăк-пĕрҫинҫен, тăнк ҫышать.

Тарçи куçне, ҫар, уçса йаҫĕ те урапа çинҫен сиксе анҫĕ. Сасартăк хăраса вăранниле унталла-кунталла пăхса илҫĕ. Хăй умĕнҫе тăракан таҫка кумерккеллĕ хуçине курсан тем пек çилли тăвăлса килҫĕ, анҫах ирĕксĕрех:

— Мĕн? тесе йăвашшăн сăмах ҫĕнҫĕ.

— Мĕн «мĕнĕ», тăрас пулаҫ ҫасрах, ййăх ҫăпти. Паçăрах çутăлнă, есĕ улпуг пек сарăлса вырттатăн, йе ҫăнах та улпуга тухасшăн?

— Йнер кĕлте пушатса ҫас выртаймарăм та, çавăнпа и, тен, пайан çутăлнине те сисмен, терĕ Çтаппан.

— Сисмен! Ак систерĕп еп сана—кĕркунне кăларса йарăп та, сисĕн вара хырăму ҫăрлага пуçласан.

Çтаппан хирĕç ҫĕнмест,—хирĕç каласа хуçине çилентересрен хăраҫ вăл. Хуçа «ырлăхне» вăл тахçанах пĕлсе çитнĕ. Пуйан Мирун мĕн тăвас тет—çавна тăваҫ: урама та пултараҫ, кăларса йарсан та унăн ирĕк.

Ерне. Мирун патĕнҫе ĕçĕ çăмăлах мар, анҫах Çтаппаьăн çапах та, выçă пурнăçа кура, Мирун патĕнҫен тухса кайасси кимест.

— Мĕн кăркка пек сĕнксе тăратăн тата? тесе кăшкăрса пăрахрĕ Мирун,—лаша кӳл те Сăрнел ҫиккинҫи йулашки йулнă çĕмеле тийесе кил. Хăнасем килиҫҫен пайан капана тăрласа пăрахас.

Çтаппан пĕр самантрах ура сырса, питне сив шывпа кăшт-кашт йĕпеткелерĕ те лаша кӳлме ҫуптарҫĕ. Пĕр ик минутран Çтаппан кĕлте тийеме тухса та кайрĕ.

Анҫах нумайах та вăхăт иртмерĕ, Çтаппан пуш урапапа кайалла вĕçтерсе килҫĕ.

— Мĕн пулҫĕ тата? тесе кăшкăрса йаҫĕ Мирун урам йенҫи ҫӳреҫине йар уçса пăрахса.

— Мирун пиҫҫе, çĕмеле такам тийесе кайнă, пĕр кĕлте те хăварман.

Çĕмел çук тенине илтсен, Пуйан Мирун шартах сикрĕ. Ҫӳреҫиве шарт хупрĕ те Çтаппăн патне урама ҫупса тухрĕ. Ҫупнă май хăйĕн туп тулли хырăмĕ, ласт-ласт, силленсе пыраҫ.

— Мĕн тетĕн? терĕ тăвăлса çитвĕ сассипе Çтаппан çине тилмĕрсе пăхса. Çилли капланса килнипе хăй пĕрре кăвакарса, тепре хĕрелсе кайаҫ, çамки çинҫи йун тымарĕсем пӳрне хулăмĕш хăпарса çурăлас пек выртаççĕ, куçĕсем сиксе тухас пекех Çтаппан çине тĕллесе пăхаççĕ.

— Çĕмеле вăрăсем вăрласа кайнă тетĕп.

— Ах. шуйттансем!—тесе кăшкăрса пăрахрĕ Пуйан Мирун пĕтĕм çансурăмне ҫĕтретсе йарса. Ах, çăхансем!... йавăлсем!... пĕтерҫĕç.. 5 тенкĕлĕх тырра çисе йаҫĕç...

Хăй икĕ ҫăмăрне ҫăмăртаса, халех такама тытса хĕнес пек, тем тĕрлĕ авăнаҫ.

Çтаппан пĕр ҫĕнмесĕр тискерленсе кайнă хуçи çине пăхса тăраҫ.

— Ес мĕн йупа пек тăратăн тата кунта? терĕ йулашкинҫен Пуйан Мирун Çтаппан çине тулхăрса пăрахса,—кай, ҫуп ҫасрах старăстă патне, халех урапа йĕрри тăрăх кайас.

Çтаппан вăрт-варт лашине карташне кĕртсе йаҫĕ те старăстă патне ҫуптарҫĕ.

Нумайах та тăмарĕ—старăстă те персе çитрĕ. Мĕншĕн ҫĕннине пĕлсен, халăх пухас, терĕ. Тата пунеттейсем те ҫĕнтерес, терĕ.

Çтаппана каллех йал тăрăх ҫуптараççĕ. Пуйан Мирун пунеттейе кама ҫĕнмеллине те каларĕ—Иван Павăлҫа, виçĕ шыв арманĕ, пĕр çил арманĕ тытакан йалти тепĕр пуйана, Сăхă Ваçлине, йалта ҫи вăйлă кăшкăрма та ĕçме те пултаракан карланкăна, тата Шăрт Михали, йалти лавкавăç, патне те кĕрсе тухма хушрĕ.

Çтаппан каллех йал тăрăх вĕçтерҫĕ.

Пуйан Мирун çĕмелне вăрланă хыпар йала ҫасах сарăлҫĕ. Мăн Кушил пысăк йалах мар—йалта мĕн пулни, мĕн илни ҫасах йал çине сарăлаҫ. Пуйан Мирун тесен, ун пек хыпарсем тата та ҫасрах вĕçрен вĕçе ҫупса çитеççĕ, мĕншĕн тесен Пуйан Мирун Мăн-Кушилре ҫи пуйан, ҫи ҫаплă, ҫи паллă çын.

— Пуйан Мирун çĕмелне вăрласа кайнă темеççи? тесе ыйтаҫ Лутра Михала Сăхă Ваçли урам тăрăх васкаса пынине кура.

— Çапла тет çав, тет Сăхă ҫарăнса ҫăрмавса тăмасăрах.

— Пунеттейе ҫĕнҫĕим сана? тет Ваçли хыçĕнҫен Лутра Михала.

— Пунеттейе... тет Ваçли.

Лутра Махала ҫӳреҫине хупрӗ те, апат çиме пӑрахсах, Пуйан Мирун йеннелле тухса утрӗ.

* * *

Мирун умӗнҫе халӑх ҫылай пуçтарӑннӑ. Калаçаççӗ, шавлаççӗ. Пухӑннӑ халӑх варринҫе старӑстӑ темскер хыттӑнах кӑшкӑрать. Аллисемпе çапкаллаңнӑ май, хӑйӗн кӑкӑрӗ çинҫи йӗс металӗ, йалт йалт, выҫать.

— Тем каласан та, Мирун Иванҫӑ çӗмелне Сӑрнел тутарӗсемех илсе кайнӑ, тет старӑстӑ.

— Тата çавсем пулмасӑр, Сӑрнел ҫиккинҫен кам вӑрлатӑр, тутарсемех, теççӗ ытгисем те.

— Ара пӗлтӗр манӑнне те пӗр çӗмеле касса кайрӗç вӗт шуйттансем, тет çинçе сасӑпа Упрам Кӗркурийӗ,—вӑррине те кайран пӗлгӗм те, ним тума та пӗлмерӗм, тет.

— Ан шавлӑрха пустуйа, тет Мирун халӑха, кайса курмасӑр калама хӗн—те сӑрнелсем, те такам, ӑçтан пӗлен ӑна, хамӑр йалтах-и тен.

— Хамӑр йалта пулас çук, тет Упрам Кӗркурийӗ, халиҫҫен пирӗн йалта çӗмел тавраппе никама та тытман.

— Тытман тесе питех ша са ан тӑр, Упрам, тет Сурат Хветӗрӗ, кӑҫухнехи етеммӳне шанма çук—хамӑр йалта та пулӗ.

— Ан калаçӑрха тархашшӑн пустуйа, тет старӑстӑ, тем шапӑлтатса тӑриҫҫен атӑр уйа кайса урапа йӗрне пӑхар.

— Атӑр... атӑр...

— Кайар!...

— Пунеттейсем пурте килнӗи?

— Пурте, тет хыçалтан Иван Павӑлҫӑ. Хӑй тин анҫах çуллӑ икерҫ ҫисе тухнӑ пулмалла— тути çӑварне çулакаласа тӑрать.

— Кайар апла...

Тапранса кайрӗç. Мирунпа старӑстӑ малта, вӗсен хыçӗнҫен пунеттейсем, пунеттейсем хыçӗнҫен халӑх пырать. Утнӑ май çынсем пӗрерӗн-иккерӗн калаçкаласа пыраççӗ. Халапсем, паллах, малтанлӑка çӗмел вӑррисем çинҫенех.

— Каларӑм пӗркунах халӑх çинҫе, тет Сурат Хӗветӗрӗ, уй хуралçисене çав Сӑрнел ҫиккине лайӑхрах сыхлама хушас тесе, итлемеççӗ вӗт—ей кам мурӗ пырса кӗтӗр унта çырма пуçне, теççӗ. Ак хайхи, пырса кӗме мар, тасатса та кайнӑ, тет.

— Ей, пирӗн халӑхпа, тет тепри, каласан та ним тулӑка кӗресшӗн мар,—уй хуралçисене мар йал хуралне те ҫипер тӑмаççӗ.

Халап йалти кӑлтӑксем ӑшне кӗрсе кайать. Ҫӑнах та кунта калаçмалли нумай, калаçни те темӗн ҫухлех пулнӑ. Анҫах çапах та халӑх нийепле те татӑлса килӗшмейст.

— Ҫеретлӗ хурала пӑрахас, хуралӗç тытас, теççӗ хӑшӗ хӑшӗ халӑх çинҫе. Анҫах çавӑнгах карма çӑварсем кӑшкӑрса та пӑрахаççӗ—

— Мӗн хурал тытса укçа сайа йамалли пур, ҫеретлех хӑварас.

Йал хуралне ҫеретле тухмаллах хӑвараççӗ, анҫах ҫерет çитсен карма çӑварсем хӑйсемех ҫерете пӑсса йараççӗ. Мӗн тӑвас тетӗн? Нимӗн те тӑвайман, пӗтӗм йалти ӗçе карма çӑварсем туса тӑраççӗ.

Мӑн-Кушил авалтанпах тӗрӗс-тӗкел пурӑнайман. Йал хушшинҫе вӑрçӑçапӑçу ӗлӗкренпех пулса пынӑ. Пӗри теприне курайманс, тепри, тӗк тӑнӑ çӗртенех, виççӗмӗшӗнне пуçне çапса шӑтарать, виççӗмешӗ хӑйӗн пуçне шӑтараканне вут тӗртме хатӗр... Халӑх пӑлханать, çӗмӗрлет —çав вӑхӑтрах ҫейерех хисем, пуйансем, хӑйсене мӗн кирлӗ, çавна туса пыраççӗ.

Пуринҫен ытла Мӑн-Кушил çыннисем çӗр пирки тавлашаççӗ. Çӗрӗ сахал, çитменнине тата тӑмлӑ, çырма-çатраллӑ. Пурин те хӑйне лайӑх çӗр илсе йулас килет, анҫах хӑйӗн пӗртен пӗр навус тӑкса çемçетнӗ çурпилӗкне туртса илсен, тем тӗрлӗ çиленет, халӑха хирӗç пыма тытӑнать.

— Ма илтĕрха, халăх, ман йал вĕçĕнҫи анана? тесе ыйтаҫ халăхран Хăнҫăр Петĕр.

— Ма илтĕр?.. Ма илтĕр,—кам пĕлет ма илнине—ав ыйт Сăхă Ваçлинҫен хăйĕнҫен, теççĕ Петĕре хирĕç.

Ҫăнах та пĕлтĕр çĕр валеçнĕ ҫухне Хăнҫăр Петĕрĕн навус анине Петĕртен туртса илсе Сăхă Ваçлине паҫĕçĕ.

— Парас Сăхă Ваçлине, тесе кăшкăрҫĕç ун ҫухне Иван Павăлҫăпа Пуйан Мирун.

Паҫĕç Сăхă Ваçлине. Анҫах Сăхă тепĕр куннех навус анине Пуйан Мируна 3 çуллăха сутса йаҫĕ. Çапла Мăн Кушил халăхĕ вăрçаҫ, хирĕлет. Хирĕлнĕ май пĕрмайах хăй аллинҫен ҫи лайăх анасене вĕçерсе пыраҫ.

Иулашки çулсенҫе Мăн-Кушил пурнăçĕ пуштех пăсăла пуçларĕ. Сăрнел тутарĕсем Мăн-Кушиле пит илеисе çитрĕç Кунĕн çĕрĕн йалтан туха пĕлмеççĕ, пĕрмайах ĕçкĕ шыраççĕ. Ĕçкĕ май Мăн Кушил çыннисем те ҫылайĕшĕ тутарсемпе туслашма тытăнҫĕç Тутарсем пиркийех тата çĕнĕ пуйансем те çурала пуçларĕç. Тĕлĕнмелле! çĕрĕ те мĕнĕ те ытгисенни пекех, çынтан ытлашши ĕçлени те çук—мĕн шыçмаклантарса йаҫĕ-ха вĕсене? Иал çыннисем мĕн пирки шыçмакланнине пĕлеççĕ те, анҫах уççăн калама хăраççĕ.

— Çав çавăнне кĕçĕр кас виçĕ сурăхне илсе кайнă тет, теççĕ çынсем ирхине пĕрне пĕри тĕл пулсан.

— Çав Мирун шуйтган хушнипех турĕç ĕнтĕ кăна та, теççĕ ыттисем шăппăн.

Çапла, çав Мирун пек пуйансем йал халăхне хăратса пурăнаççĕ. Хăйсене хирĕç каласан калаканнăне йе лашине йе сурăхне, йе тата кĕлетри йапалисене вăрлаттарса йараççĕ.

Йал хирĕçет, йатлаçаҫ, анҫах пуйансене хирĕç тăма хăраҫ, мĕншĕн тесен вĕсен шайкки пĕтĕм йала çавăрса илнĕ. Çитменинне тата мĕн пур вăрри мĕн пур урегник-страшвĕкĕсем те, пурте вĕсен тусĕсем. Мĕн тăвас тетĕн—шăла çыртас пулаҫ те ҫăтас пулаҫ.

* * *

Калаçкаласа пынă май ана тĕлне çитрĕç. Çтаппан çĕмел вырăнне йертсе кайрĕ. Çĕмел ларнă вырăнта ыраш пĕрҫисем анҫах сапаланса вырта ççĕ.

— Халăх, айаккарах пăрăнăр, йĕр çине ан таптăр, тесе кăшкăраҫ старăстă.

Халăх кĕршĕ ана çинҫен пăрăнса çĕмел вырăнĕ патне пырса пуçтарăнаҫ.

Çĕмел кутĕнҫен çавăрăнса кайнă урапа йĕрри ана тăрăх йарах тăсăлса вырта ҫ. Малти урапи шинлă, кайри шинсăр. Кайри урапин сулахай тукăнĕ пăркаланҫăк ахăртне—ана тăрăх çĕлен пек кукăр-макăр йĕр туса кайнă.

Пурте, кам урапи-ши ку тесе, пуç мимисене çавăраççĕ. Анҫах нихăшĕ те йалта никам урапи патне пырса перĕнеймеççĕ. Кукăр макăр йĕре пăхсан, —ун пек йĕр тăвакан пăркаланҫăк урапасем йалта ҫылайĕшĕн пур, анҫах камăнши малти шинли, кайри пăркаланҫăкли?

— Аҫăр, халăх йĕр тăрăх кайар, терĕ старăстă. Кайрĕç йĕр тăрăх. Пуйан Мирунпа старăстă малта, вĕсем хыçĕнҫен пунеттейсем, пунеттейсем хыçĕнҫен халăх пыраҫ.

Ана вĕçне тухрĕç. Йĕр ана пуçĕнҫи çул çине пăрăнҫĕ. Çеп-çемçе тусанлă çул çинҫе йĕр лаптах выртаҫ. Кайрĕç çулпала. Анҫах пĕр ик ана урлĕш кайсанах йĕр Мăн-Кушилле Сăрпел-ҫиккинҫе саралса выртакан йемйешĕл куракла пруҫăк (кран) çине пăрăнҫĕ те, пĕтрĕ.

— Ак, тамаша!..

— Мĕн тăвас?..

— Ара, мĕн тăвас—кайăр иккĕн виççĕн çулелле, епĕр, ыттисем, пруҫак тăрăх айалалла анăпăр, йĕр ăçта та пулин пруҫак çинҫен пăрăнмаллах, терĕ старăстă.

— Ҫăн, Микихвер пиҫҫе, йĕр пăрăнаҫех...

— Атăр, ерттел, çÿлелле, терĕç хăш-хăшĕ.

— Атăр!..

Уйăрăлса кайрĕç—пĕр ерттелĕ Сăрнел йалĕ йеннеле, тепри, Пуйан Мирунпа пĕрле, айалалла уттарĕ.

Çылай вăхăт иртрĕ. Икĕ ерттелĕ те пасăрах куçран çухалçĕç. Икĕ ерттелĕ те малалла угаççĕ, хăйсем пруçук айкине тем тĕрлĕ тинкерсе пăхса пыраççĕ. Çук та çук! Иĕр ниçта та пăрăнса кĕни курăнмарĕ. Пуçтарăвçĕç каллех ĕлĕкхи вырăна.

— Ну тупрăра? тесе ыйтат пĕр ерттелĕ тепривçен.

— Çук. Е ĕр?

— Çук. Сехре çырминех çитрĕмĕр, ниçта йĕр пăрăннине курмарăмăр.

— Сехре çырми тăрăх кайса пăхмаллаçĕ тата, теççĕ аптăранă йенне тепĕр ерттелгисем.

— Кам шуйттан пырса кĕрет унта ишĕлекен çырма тĕпне, теççĕ лешсем.

— Ара çырма тĕпне мар, çерем тăрăх кайса çырма пуçĕвçен çаврăнса кайма пултарнă вăл, тет Лутра Михала.

— Кайĕ унта вăрру. Епĕ унта вунă тенкĕ парсан каймастăп кĕлте тийенĕ урапапа—тÿнçĕ кайрĕ урапу та, пĕтрĕн вара лашу мĕнĕпех çырма тĕпне анса кайсан.

Халăхсем çылай шавларĕç, çылай шухăшларĕç, анçах никам ним те пама пултараймарĕ.

— Мĕн тăвас?

— Киле кайас, тейе пуçларĕç.

Пуйан Мирун пуçĕвçе темле шухăш пур. Халăх шавланă май вăл Шăрт Михалипе Иван Павăлçи кăшт тĕртрĕ те, йĕр пăхнă пек пулса, халăхран пĕр ик çулăш айаккала илсе кайрĕ.

— Çак ĕçе Кăтра Иван Кĕпĕрйанĕ тунă, терĕ вăл шăппăн.

— Ара унăн малти урапи шинлă марçке, терĕ Иван Павăлçă тĕлĕнсех.

— Шинлă мар та, пайан шинлă пултăр—ман ăна «шинлаттармалли» пурха, терĕ Мирун куçне хĕссе.

Иван Павăлçă çасах сисрĕ, вăл Мирун Кĕпĕрйана тахçанах «шинлаттарасшăн» çуннине ахаç те пĕлет.

— Есĕ те, Михал Çтаппанçă, терĕ Мирун Шăрт Михали йенне çаврăнса, Сăхă Васлисене тĕрт—ан ÿркенçĕр пайан кăшкăрма.

Халăхсем пĕрерĕн икшерĕн килелле ута пуçларĕç. Çĕмел вăррине тытайманни çылайăшне кÿревтерçĕ. Хăшĕн хăшĕн ĕмĕтленнĕ ĕмĕтне те татрĕ.

— Ĕлĕк авал вăрă хурах тытсан пăртак ал хĕрмеллĕх сыпкалакан çĕ теççĕç ваттисем, тесе шуйт туса илçĕ Сăхă Васли.

— Авал вăррисем те тытăнатçĕç тет ça-ав. тесе йури култармаллах хуйхăрнă пек пулса йăвăррăн сывласа йаçĕ Сурат Хĕветĕрĕ. Халăх ахăлтатса кулса йаçĕ. Ахăргне, пĕри те çĕмел вăррине тытса çышкăсене хĕртмеллĕх сыпас шухăша хирĕç пулман.

— Ан кайăрха, халăх! тесе кăшкăрса йаçĕ сасартăках Пуйан Мирун халăх хыçĕвçен.

— Мĕн тупрăн тата, Мирун Иванçă? тесе харăсах çарăнçĕç çынсем.

— Тупасси тупман та, çапах та ан васкăрха.

Халăх, Пуйан Мирун тем каласса сиссе, ун патне пухăнса тăçĕ.

— Ак хайхи! терĕ Сурат Хĕветĕрĕ хăй умĕнçе тăракан хĕрлĕ сухала тĕртсе,—тем каласан та ку ывăнса çÿренине кура пĕр çетвертлĕх парасшăн.

— Кĕтсех тăр Пуйан Мирун парасса. Сан пеках ухмах тетĕви есĕ ăна?

— Ухмах мар та, çапах та, тен...

Халăх кăйлла пухăнса çитсен, Пуйан Мирун çапла сăмах пуçларĕ:

— Çак ĕçе, никам тă мар, хамăр йалсемех тунă

Хамăр йалсем тенĕрен, кашни пĕр пĕрин çине пăхса илçĕ: те хăйсем хушшинçех тăракан вăрра паллас тесе, те хăйсене вăрă тесе кăтартасран хăраса.

— Кам вăрланă? тесе ыйтрĕ пĕри халăх хушшивçен.

— Кăтра Иван Кĕпĕрйанĕ.

Çынсем куçсене йарах çарса пăрахрĕç—никам та ун çине шухăшламан.

— Çавах, халăх, çавах, тет Пуйан Мирун, кукăр-макăр ҫупакан сулахай кайри урапа камăн пулгăр Мăн Кушилре?—Кĕпĕрйанăн.

Мирун йал хушшинҫи сулахай кайри урапасене сăнани ҫылайĕшне тĕлĕнтерсех пăрахрĕ.

— Ах, шуйттан шампа хырăмĕ—сулахай сылтăм урапасене те сăнаҭ, мур илмешĕ. Хаҫ те хамăн ҫалăш тукăнли сулахайра мар—вăрă туса хураҭҫĕ вĕт ку, мур, тесе çын кураҭҫен хăвăрт сăх-сăхсăхса илҫĕ Лутра Михала.

— Ҫăнах та кам мурĕ асăрхаҭ ăна урапа майланă ҫухне—те сулахайа лекет вăл, те сылгăма, мур асăрхаҭи ăна, тесе шухăшларĕç ыттисем те Лутра Михалапа пĕр вăхăтрах.

— Ара, увăн малги урапи шинсăрçке, терĕ Пуйан Мируна хирĕç Сăхă Васли.

Шăрт Михали Сăхă Васлине тĕртрĕ. Шăрт Михалине курсан Сăхă ҫĕлхене шатах çыртрĕ. Çитменнине тата Шăрҫĕ Васли ури çине пусса Мируна хирĕç шавлама йураманнине систерҫĕ.

— Щинлă урапа тупасси йăвăр тетĕвим вара есĕ, Васса? терĕ Мирун Сăхă çине сиввĕн пăхса.—Малти урапине вăл пĕр каçлăха такамран та тупма пултараҭ. Ес асăрхаманим унăн Малги Касри йыснăшĕн тăрантас урапине? Йыснăшне епĕр пĕлетпĕр вĕт мĕнле çынвине, тет Мирун.

Халăх Сăхă Васли мĕн каласса кĕтет. Авҫах Сăхăн хирĕç каласси мĕнĕ пулмарĕ.—Кам мурĕ пĕлсе çиттĕр вĕсен йыснăш каҫкине, терĕ те ҫаравҫĕ.

— Кĕпĕрйанах тунă ку ĕçе, терĕ Иван Павăлҫă та халăх варривелле тухса.—Мирун Иванҫă каласан епĕ хам та аса илгĕм,—Кĕпĕрйавăн ҫăнах та кайри урапи кукăр-макăр.

— Кукăр-макăррине ăна ахаҫ те пĕлетпĕр те...

— Пĕлетĕр пулсан мĕн кирлĕ тата сире? Урапи çавăн вĕт.

— Çавă! тесе кăшкăраҭ халăх хушшинҫен Шăрт Михали.

— Урапи Кĕпĕрйанăн пулсан вăрри кам пулăр?

— Кĕпĕрйанах. Кĕпĕрйанах, тесе кăшкăраҭ каллах Шăрт Махили—Кĕпĕрйанах... Кĕпĕрйанах! теççĕ Шăрт Михали çумĕнҫе тăраканнисем те иккĕнвиççĕн.

Халăх кĕрлеме тытăнҫĕ— ҫылайĕшĕ Кĕпĕрйана вăрă тунипе нийепле те килĕшесшĕн мар,—халиҫен ăна вăрăпа тытман, теççĕ.

— „Тытман“... тытсан калаçса та тăмастпăр.

— Çапах та вăрă тытассин хăйĕн саккунĕ пур ...

— Ес-им вара уншăн саккув? Ес кăлартăна кĕлге вăррине сыхламалли саккун? Йе есĕ камне пĕлместпĕр тетне вара? Пуйан Мирунсемпе вĕсен йăттисем халăха тулама тытăнҫĕç. Пасăр кирлĕ вăхăтра ҫĕлхине шатах çыртнă Сăхă Васли вим пакки-ҫиккине пĕлмесĕр кăшкăраҭ—аҭăр, халăх, Кĕпĕрйан урапине кайса пăхар, тет.

— Аҭăр, теççĕ ыттисем те.

— Аҭăр... Аҭăр.

Кĕпĕрленсе кайрĕç.

* * *

Кĕпĕрйан Мăн-Кушилре ытти килхуçисем хушшинҫе ни пурлăхĕпе, ни хăйĕн халăх çинҫи йаҫĕпе халиҫҫен ниăçтан та уйрăм паллă çын пулса тăман. Йалçыннисем ун çинҫен калаçас-мĕн пулсан та:

— Шалккă мĕскĕне, çамрăклах аспапланса пурăнма тиврĕ, авҫах теççĕ.

Кĕпĕрйан çинҫен урăх калаçма, ҫăнах та, ним тĕл те çук. Пурлăх, пуйанлăх тĕлĕшпе вăл йал хушшинҫе никама та хапсăнтарас çук. Кĕпĕрйавăнни пек ҫĕренҫе витнĕ виĕ пўрт, вите. ҫалăшса кайнă ҫериклетекен хапха—ун пек хуралт Мăн Кушил çиннисемшĕн пит ăмсанмаллах пуйанлăх мар. Мăн-Кушил аслă урамне Кĕпĕрйан хуралҫĕ хăй те илем кўрес шухăша тахçанах пăрахнă Илемлетме мар, хăйĕн ватă, тĕксĕм сăвĕпе аслă урамра сулхăн ларни урам ҫапне те пăса пуçларĕ.

Мăн-Кушил аслă урамĕ, авалхи пĕртен пĕр урам, йулашки çулсенҫе ҫылай улшăвҫĕ. Авалхи çынсенҫен йулвă авалхи хуралтсем пыра-киле сахаллана пуçларĕç. Вĕсем вырăнне аçта çигвĕ—унта çĕнĕ хуралтсем аталана-аталана ларма тытăвҫĕç. Çĕнĕ пўртсем хушшинҫе шагровойсемте кăшт кашт курăнкала пуçларĕç. Çурта пек тўрĕ те сап-сарă пĕренерен пурана пўртсем пусĕсене каçăргса ларасçĕ. Пысăк ҫўреҫисем хĕвел çинҫе йăлтăртатса иртенçўрене хавассăн пăхса ăсатса йарасçĕ. Йал улшăнаҭ, кивĕ тумтирне пăрахса çĕнĕ тăхăнаҭ. Пĕр Кĕпĕрйанăн ҫĕренҫе витнĕ пўрҫĕ авҫах хăйĕн симĕсĕнкăвакăн курăнакан икĕ пĕҫĕк хĕсĕк куçĕсемпе тинкерсе пăхса, урам ишемне пăсса лараҭ.

— Ех, анне, хăçăн çынсем пек çĕнĕ хуралт çавăрăпăрши? тет Кĕпĕрйан амăшне.

— Ан хуйхăрха, Кĕпĕрйан, тет амăшĕ, сывлăху пулсан есĕ те çын шутне кĕрĕнха. Тавга пуç турра, хаҫ лаша туйантăмăр, анасене текех çынна памастăпăр—малашне те çаплах пырсан, тен, çуртйĕрне те çавăрăпăрха, тет амăшĕ Кĕпĕрйана пусарса.

Анҫах Кĕпĕрйан амăшĕ хăй те тем ҫулах хуйхăраҭ. Хуйхăрмасăр, пĕр хуйхăрма вĕреннĕ çын хуйхăратех ĕнтĕ. Аллă çула çитиҫҫенех карҫăк пулса ларнă та, ăçтан унта савăнмалла шухăшсем пулҫăр? Кĕпĕрйан амăшĕ вăйпитти ҫухне йăвăр ĕçпе çĕмĕрĕлсе пĕтнĕ. Шăмшаккисем ыратнипе хăй пĕрмайах йăнăшаҭ.

— Ытла ҫас ватăлтăн-çке ес, анне, тесе шеллет Кĕпĕрйан хăш ҫухне амăшне.

— Ватăлтăм çав, ывăлăм, ватăлтăм, аçу патаккине çисех ватăлтăм, тет амăшĕ сĕтел патне пырса ларса.

Кĕпĕрйанăн йăваш куçĕсем амăш çине ăшшăн пăхасçĕ. Ҫăнах та Кĕпĕрйан амăшĕ упăшкинҫен нумай ҫатнă пулмалла. Ав, халĕ те пĕркеленсе пĕтнĕ пит çăмартисем çинҫе ĕмĕрлĕхе йулнă пысăк-пысăк паллăсем кăн-кăвак кăвакарса тăрасçĕ. Апат çиме ларсан та сылтăм аллипе кашăк тытаймасҭ, сулахаййипе анҫах сыпкалаҭ.

— Çав Иван пиркиех ҫăлах пулса йултăм çав,—вут пуленкипе çапса хул пуççи тĕпекине çĕмĕрсе пăрахрĕ вĕт асар-писерскер.

Кĕпĕрйан амăш мĕншĕн ҫăлах пулнине тахçанах пĕлет. Анҫах амăшĕн сăмахне татас мăр тесе, мĕншĕн? тесе ыйтаҭ.

— Мĕншĕнне кам пĕлет увне. Пĕрмайах ĕçетҫĕ, пĕрмайах хĕнетҫĕ. Пуйан Мирун патĕнҫен туха пĕлмесҫĕ, киле таврăнсан пушшех те урса кайаҭҫĕ. Çав Пуйан Мирунах пĕтерҫĕ çав аçуна, тет амăшĕ.

Пуйан Мирун тесен, Кĕпĕрйан, калаçса ларнă çĕртех, çилли тулса килнипе, хĕрелсе кайрĕ. Пиçнĕ панулми пек хĕп-хĕрлĕ икĕ пит çăмарти çинҫе темскер кăлт-калт турткаласа илҫĕ.

Кĕпĕрйан пуйан Мирун увăн ашшĕпе амăшне мĕн-мĕн «ырлăх» тунине лайăх пĕлет. Аш ĕ Пуйан Мирун патне ҫас ҫасах çўренине, увăн патĕнҫен пĕрмайах ўсĕр таврăнса амăшĕпе хирĕлнине Кĕпĕрйан, ун ҫухне çамрăк пулнă пулсан та, лайах астăваҭ. Елĕкхине астуни кăва мар, Пуйан Мирун хаҫ те Кĕпĕрйана ҫас ҫасах хăй çинҫен аса илтерет. Елĕк ҫухне ашшĕне çаратса кĕлмĕçе хăварни çитмен, хаҫ те вăл Кĕпĕрйанпа амăш ҫĕрисен тăпсинҫех лараҭ.

Кĕпĕрйан ашшĕпе амăшĕ, Кăтра Иванпа Алтатн, ĕлĕк Мăн-Кушикре аванах пурăннă, тет. Вĕсем иккĕшĕ те кăмăллă, ĕçлеме йуратакан çынсем пулнă. Çурт йĕрĕнҫе вĕсен хăйсене пурăнмаллăх тупра пулнă. Тырри-пуллинҫен вĕсем вихăçан та аптăраман.

— Тавта пуç турра—халиҫҫен пăтăв илсе çисе курман, теҫҫĕ Кăтра Иван арăмĕпе калаçса ларнă ҫухне.

Анҫах пурнăç урапи пĕрмайах тикĕс пымасҭ,—тем тĕрлĕ аван пурăннă çĕртенех хăш ҫухне кĕтмен йапаласем килсе çапăнасçĕ. Пĕр çуркунне, шăп акана тухас тенĕ ҫухне, Иванăн лаши ҫирлерĕ. Ҫирлерĕ те ик виç кунтан тăсăлса та вытрĕ. Иванпа арăмĕ тем пек хыпса ўкрĕç.

— Мĕн тăвас? теççĕ иккĕшĕ те пĕççисене, шарг, çапса.

— Мĕн тăвас тетĕн, çĕнĕ лаша илес пулать—лашасăр пурнăç пурнăç мар.

Пулмери тырривçен вăрлăх ваççи уйăрса хураççĕ те, йулашки йулнине сутса пĕр хăла лаша илсе йараççĕ. Лаши çиперскерехçĕ, пысăках та мар та, çăп-çămăрçĕ хăй. Çула тухсан йургапе, ака сухара турттипе савăн тарать. Кăгра Иван хăй те савăннăçĕ—ку лаша хăйĕн хакне татĕха, тесе тăратçĕ.

Анçах телей пулмарĕ—пĕр каçхине, питрав умĕн, хăла лашана выртмаран вăрласа кайрĕç.

Ку инкек Иван та арăмне йăлтах хуçса кайрĕ. Кăтра Иван тем пек ăшаланса ӳкрĕ. Лашана шырама тытăвçĕ. Йалта лаша тавраш ӳсхалсан хăшне хăшне Пуйан Мирун тупса паракан—унăн снаккум нумай—уретникĕ те вăррисем те. Анçах хаçхинçе Иван лашне тупаймарĕ. Аптăранă йевве Иван Сăрнел тутарĕсене çылайешне ĕçтерсе пăхрĕ, анçах, вĕсем те нихăшĕ те лашана тупса параймарĕç. Лаша, шыва путнă пекех, паçах çухалчĕ.

— Мĕн тăвас? теççĕ каллех Иванпа арăмĕ.

— Мĕн тăвас, тата тепĕр лаша илсе пăхас.

— Илессиве илес те, анçах укçине ăçтан тупас?

Иванпа арăмĕ темĕн тĕрлĕ те шухăшласа пăхрĕç, анçах ниçтан та лаша илмеллĕх укçа тупас меслет тупаймарĕç. Йулашкинчен Иван Пуйан Мируна кайса пуççапас терĕ—тен лаша илмеллĕх укçа памĕ-и?

Пĕр каçхине Кăгра Иван Мирун патне уттарçĕ. Авалтан йулнă йăлана астуса вăсйиве пĕр пулштух ерех çикрĕ.

Пуйан Мирун Ивана питĕ хĕрхенсе каларĕ. Нушталлă çынна çемçе сăмахсем те лăплантарçĕ, анçах Иван лаша туйавмалăх пулăшу ыйтма килнине пĕлсен ăшаланă пăрçа пекех хытса ларçĕ.

— Ей, Иван шăллăм, ăçтан пирĕн у. çухлĕ укçа пултăр. Çук, çук, тупаймастăп, тем çул тархасласан та пулăшаймастăп, тет.

Иван ката пагĕвçи хура пусри çурпилĕкĕ çи çен асăнса илçĕ—хамăн акса хăварасси пулмасть пуç. лаша çук, тытса актарма хакла ларать....

— Лашасăр кансĕр çав, лаша илеймесен акма мар, акнине те сутса йарăн, тет Мирун.

Иван çĕнмест—унăн пуçĕнçе йавăр шухăшсем йăшăлтатаççĕ Мируна пулăшĕ тесе шанвăçĕ, анçах вăл, нушталлă çынна пулăшас выранне, Иванăн акнă анисем çинçен калаçа пуç арĕ.

— Тархашшăн, хура пусри çурпилĕкпе килĕп, тесе тархаслать Иван.

— Çук, пултараймастăп—хама укçа кирлĕ. Навус анине парсан мĕн пулĕ, тесе ларать Мирун.

Нимĕн те тăваймăн. Пулштуха ĕçсе пĕтернĕ çĕре Иванпа Мирун килĕшрĕç. Мирун Ивана кĕркуннеччен 30 тенкĕ парать, пулăшу парăшăн Иванăн навус ани çинчи ырашне çурриве вырса илет. Иван кун пăн та савăнçĕ, савăннипе Мируна ӳксех пуççапрĕ.

Çакăнтан вара Кăтра Иван Мирун аллине кĕрсе ӳкрĕ. Малтанлăха вăл, Мирун укçипе лаша илсен, питĕ савăнçĕ —Тавта пуç, терĕç арăмĕпе иккĕшĕ те, лаша тĕлĕ курасса сунманçĕ, терĕç. Анçах Мирун ыраш анине вырса илсен Иванпа арăмĕн çунĕсем хуçлавçĕç Мĕн тăвас тетĕн—килĕшрĕвĕ çапла. Иван, çĕнĕ лаша хакне кăларас тесе, ĕçлеме тытăнçĕ. Станçава, хулана лава çӳрерĕ. кĕрĕшсе пĕр икĕ ава сухаласа-акса паçĕ, тата çăвăн пек ытти ĕçсем те çылайах ĕçлерĕ, анçах, темĕн çухлĕ асапалансан та, 30 тенкĕ мар, 30 пус та Мируна параймарĕ. Ĕçлесе тупнă укçа хăйсене çиме, тата лашине тăрантарма анçах çитсе пычĕ.

Кĕркунне йевне кайсан Мирун парăм çинчен астутара пуçларĕ. Иван калан вăхăта парайманнине кура, лашине туртса илессипе хăра а пуçларĕ. Иван каллех вăсйине пулштух çикрĕ те Мирун патне, парăма çуркунне ччен тăсма, пуççапма кайрĕ.

— Мирун Иванçă тет Иван каллех пуççапса, тархашшăн çуркуннеччен тăт,—хăвах пĕлетĕн-çулла укçа тупма пулмарĕ, тата, çитменнине, кăçал

тырри те сахалтарах пулӗ, хӗле кӗрсен ӗҫ нумайтарах тупӑнаканӗ, ҫуркуннене хатӗрлеп, тет.

Мирун ҫуркуннене хӑварӗ, анчах, хӑйӗн ырӑ кӑмӑлне кура, Ивана та кӑшт-кашт килсе пулӑшмаллӗ. Ҫавантан вара Иван час-часах Мирун патне пулӑшма ҫӳре пуҫларӗ. Хӑш чухне хӑйӗн копланса килнӗ ӗҫне пӑрахсах Мирун патне тухса утатчӗ Мӗн тӑвас тетӗк!—чӑнтерет вӗт, каймасан йӗрамасть Иван арӑмӗ. Кӗпӗрйан амӑшӗ, вара пӗтӗм килти ӗҫсене хӑй туса тӑратчӗ —выльӑхне пӑхатчӗ, йашка ҫӑкӑр пӗҫеретчӗ, хӑш чухне вӑрман касма та хӑйех каятчӗ

— Ех, хӑҫан ку Мирунтан хӑтӑлӑпӑрши, тесе макӑратчӗ вара хӑш чухне ытла та чунӗ тарӑхса ҫитсен.

Анчах Мирунтан хӑтӑласси пулмарӗ. Парӑмӗ кӗркуннерен ҫуркуннене, ҫуркуннерен кӗркуннене йулса пычӗ, ҫитменнине тата Иванӗ те, чунӗ тарӑхнипех пулӗ. ҫав, ӗҫе пуҫларӗ. Пӗр ӗҫме тытӑнсан вара парӑм тӑгасси тата та шала кӗрсе кайрӗ.

Иван час часах киле хӗрӗнкӗ таврӑна пуҫларӗ.

— Ах, Иван чунӑм, каллех ӗҫнӗҫке есӗ, ма пӑртак шухӑшламастӑн парӑма татас тесе? тетчӗ вара арӑмӗ.

— Ан шавла тархашшӑн, сансӑр пуҫне те кунта чӗре ҫунат, тесе хуратчӗ Иван арӑмне.

Иван пурӑна-киле тӑтӑшах ӗҫе пуҫларӗ. Ӳсӗрӗлсе килсен, ҫиллине шӑнараймасӑр, арӑмӗпе хирлешме тытӑнатчӗ. Утне тивмен—туртине, тесҫӗ ваттисем. Ҫавӑн пекех Иван та, Мируна тарӑхса, арӑмне хӗне пуҫларӗ Кӗпӗрйан амӑшӗн пурнӑҫ пӗтӗмпех хӗсӗнсе ҫитрӗ. Иван ерех ӗҫмесӗр сахал кун иртеретчӗ, ӗҫсе таврӑнсан хӗнемесӗр хӑвармастчӗ. Ҫапла хирӗлсе-ҫапӑҫса пурӑнна хушӑрах пӗр вӑхӑтра Иван хытӑ чирлесе пӑрахрӗ те. вилсе те кайрӗ. Арӑмӗ вара вунпиллӗке кайнӑ ывӑлӗпе, Кӗпӗрйанпа, тӑрса йулчӗ.

Мӗн тӑвас? Кӗпӗрйан ҫамрӑк, хӑй, хӗнесе пӗтернӗскер, ӗҫлеме пултараймасть. Ҫитменнине тата. Иван вилсен Мирун та парӑма текех тӑсасшӑн пулмарӗ. Ирӗксӗрех вара Иван арӑмӗн лашине сутса парӑма татмалла пулчӗ.

— Мӗн пулсан пулать, лашана сутас та Мирунтан хӑтӑлас,—ҫут тӗнчере выҫӑ вилмӗпӗрха, терӗ.

Лашана сутса йулашки йулнӑ парӑма татрӗҫ. Мирун вунпилӗк тенкӗ йулнӑ терӗ. Вунпилӗк тенкӗ парӗҫ. Кам шутланӑ уйӑнне? Иван пулӑшмалла кайа кайа ӗҫленине, Иван ӳсӗрле килтен Мирун патне тем те пӗр йапала сӗтӗрнине, ыраш пуссинчи анана вырса илнине шутласан, тен, Кӑтра Иван парӑмӗ пилӗк хут та татӑлнӑ пулӗ.

— Ан тив ӗнтӗ—пуйтӑр пирӗн куҫҫулӗпе, терӗҫ Кӗпӗрйанпа амӑшӗ.

Мирунтан хӑтӑлчӗҫ. Анчах пурнӑҫ тата йаварланса кайрӗ. Ҫӗрсене малтанлӑкла ҫурмалла акмалла парса пычӗҫ, кайарахпа икӗ вӑчӗпех тара пара пуҫларӗҫ. Пурнӑҫ йӑлтах пӗтсе ҫитрӗ, ҫиме ҫӑкӑрӗ ҫитеймиуи пулчӗ. Килне ху са вара йут йала ыйткалама та кайа пуҫларӗҫ. Ҫапла вара мӗн тӗрле тӗрӗс-тӗкел пурнакан килйыш ҫука тӑрӑа йулчӗ. Чип чиперех хӑй пурнӑҫӗпе пурӑнакан ҫуртиӗр те тӗтӗм сӳнӗ пекех пӗр сасӑсӗр шӑп пулса ларчӗ.

Кӗпӗрйанпа амӑшӗ ҫак вӑхӑта час часах аса илеҫҫӗ. Аса илсен вӗсем, йепле выҫӑ вилмен тесе, шалтах тӗлӗнсе кайаҫҫӗ.

— Йурать есӗ ӳссе ҫитӗнтӗн, тет амӑшӗ, есӗ пулман пулсан епӗ тахҫанах выҫӑ вилмелле, хӑй чун хавлӗпе сӑх-сахса илет—тавта пуҫ турра, пӑрахмарӗ, каллех хамӑра хамӑр пурӑнмаллӑх пурнӑҫ пачӗ. тет.

— Турри те пирӗн ҫиве питех пӑхасшӑн мар ҫав, анне тет Кӗпӗрйанӗ, вӑл пурривех парать: ав, пӑхха Пуйан Мирунӑн мӗн-мӗн ҫук, тем те пур, ҫапах та ҫитмест—татах пуйас тесе ҫунать. Пирӗн пекки пур, тем пек асаплансан та хӑйӗнчен ытлашши тупаймасть.

— Пуйан Мируни? тет амӑшӗ. Мируна ӑна турӑ мар, шуйттан пуйтарать. Шуйттан пулӑшать ӑна ҫын пурлӑхне вӑрласа пуйма. Ех, ҫӗрҫӑташшӗ, тет амӑшӗ тарӑхса.

Кӗпӗрйанпа амӑшӗ Мируна ытхавман кун сахал иртет. Кирек мӗн ҫинчен калаҫас пулсан та сӑмах Мирун ҫине кӗрсе кайать. Ҫак иртнӗ кӗр-

куннерен тата пуштех те Кĕпĕрйанпа амăшĕ Мирун йатне асăна пуçларĕç, пуштех те вĕсен, Мирун тесен, ҫĕрисем кăрт-кăрт тăва пуçларĕç.

— Татах пĕтерешĕн ĕнтĕ пире, татах ҫийесшĕн пирĕн пуҫа, теççĕ иккĕшĕ те Мирун ҫинҫен калаçма тытăнсан.

Пуйан Мирун ҫылайтанпа Мăн Кушилре трахтир уçасшăн ҫунат. Ун шухăшĕпе Мăн-Кушилре трахтир пит усăллă пулмалла—йалта ернере пĕрре пасар пулат, кашни праçнăк кунĕ Мăн Кушил ҫиркуне прихут ҫыввн пухăнат, ҫитменнине тата, Сăрнел тутарĕсем ҫапа тухнă май, ĕçкĕ питĕ кайа пуçларĕ.

— Ех, пĕр кĕрлеттерсе кăна йарăттăм трахтир уçса, тет Мирун.—Вырăнĕ ҫукки ҫарса тăрат, вырăнĕ пулсан ыранах хулана права илме кайăттăм, тет.

Пуйан Мирун пуçне ҫак шухăш ҫылайтанпа çĕмĕрет, анҫах пасар ҫывăхĕнҫе пушă вырăн ҫукки ĕçе ҫарса тăрат.

Мĕн тăвас? Акă мĕн тăвас. Пасар ҫывăхĕнҫех Кăтра Иван Кĕпĕрйанĕн хăрăк харăк хуралҫĕ аслă урам тĕсне пăсса ларат. Кĕпĕрйана унта ларсан вим усси те ҫук—сут тумаст, мĕн тумаст,—йарас ăна хамăн йал вĕçĕнҫи ҫĕнĕ плант ҫине.

Мирун, ĕçе ҫылайа йамасăрах, пĕр каçхине Кĕпĕрйана тĕл пулса хăй шухăшне пĕлтерет. Анҫах Кĕпĕрйан шарт та март, вим тулăка та кĕресшĕн мар.

— Епĕ сана пĕтĕм хуралту мĕнӳ йалтах хамах куçарса парăп. Пĕр пус та санран расхут тухас ҫук.

— Манăн капла та расхут ҫук, мĕншĕн епĕ тата санпа ҫыхланам.

— Пӳртне сиплесе парăп, пӳртӳ ишĕлсе анат вĕт, Кĕпĕрйан.

— Спаççипă ырă сăмахушăн, анҫах мана санăн пулăшни ҫĕрне тăршшĕ те кирлĕ мар. Аттене те есĕ пулăшу парсах ҫука йертрĕн. Ҫыхланмастăп санпа, Мирун Иванҫă.

— Асту, Кĕпĕрйан, кайран асăнăн та—пуҫмĕ, тет Мирун

— Ху пăртак астăварах хутлан, тет Кĕпĕрйан Мируна.

Ҫакăн йевĕрлĕ Кĕпĕрйанпа пуйан Мирун кĕркуннеперен вара темиçе хутҫен те калаçса пăхрĕç, анҫах нийепле те килĕшеймерĕç

Кĕпĕрйан Мируна парăнасшăн мар. Малтанлăха ăна Мирун тархасласа ыйтни, тен, кăмăлне те кайрĕ и,—ара ҫав тĕрлĕ курайман пуйан тăшмана пăртак та пулсан тавăрмасăр ăçтан ҫăтан? Анҫах кайарахпа, Мирун хăраткала пуçласан, Кĕпĕрйан шиклене пуçларĕ—кам пĕлет ăна? Вăл тем те тума пултарĕ. Йал ҫинҫе, вĕт, вăл хуçа—мĕн тăвас тет, ҫавна тăват.

Ҫавăнпа та Кĕпĕрйанпа амăшĕ ҫас-ҫасах Мирун йатне асăна пуçларĕç.

— Турă сиртĕрех ҫав шуйттанран, тесе сăх сăхса илет Кĕпĕрйан амăшĕ хăш ҫухне.

(Малалла пулат)

Елкер С.

# ХӖНХУР АЙӖНӋЕ.

(Историллӗ поемӑн малалли сыпӑкӗсем).

## IV.

Ҫиллӗ, тӑманлӑ сивӗ хӗл кунсем
Карӗҫӗ иртсе,—ҫитрӗ ҫуркунне;
Ушкӑнӑн ушкӑн кайӑк кӗшӗксем
Килӌӗҫ васкаса Кушлавӑш йенне.
Сарамас вӑрман каллех тумланат̆.
Пур кайӑксене витсе хӳтӗлет:
Ӌӑрӑш тӑрривӌе куккукӗ куклат̆,
Сӗмлӗк варривӌе шӑпӌӑк треллелет.
Кушлавӑш йалӌ те ӌӗрелнӗ пекех—
Ҫуркунне!.. тесе павларӗ майпе,
Ун ӗҫӌен халӑхӗ йурсем пӗтсенех
Ты ӑнӌӗ сарма хӗ ӗк уй ҫӗрне.
Ырӑ ҫуркунне ҫитсе тӑнине
Пурте туйаҫҫӗ, пурте кураҫҫӗ,
Сывӑ етемсем ӌунӗ—ӌӗрине
Вармана кӗрсе уҫӑлтараҫҫӗ.
Пирӗн Ӌакка та, ӗнтӗ, сывалат̆,
Унӑн шамшакри сураӊ тасалат̆,
Халӗ ӗнтӗ вӑл ҫӳрет, тухкалат̆;
Ҫурхи акана туса хӑй акат̆.
Анӌах, сывалса ҫитрӗ пулин те,
Ирӗнӗ синкерне Ӌакка манаймаст̆;
Иртнийӗ ҫех мар малашнехи те
Ӑна хӑратат̆, канӑҫлӑх памаст̆.
Малашне пӗр шиксӗр пурӑнас тесен
Кулапай таъма укҫа тупмалла,
Ҫампа та кӑҫал кӗре ҫитеӌӌен
Улӌиӌӗ тенкех тупса хумалла.

* * *

Ҫуллахи ернен илемлӗ касӗ...
Кушлавӑш йалӗ сывласа йаӌӗ:
Пӗтӗм ҫамрӑксем тухрӗҫ ӑрама
Тапратрӗ; сӑвлӑ кӗвсем калама!
Улеӌе йенӌи ҫерем уҫланкра
Вӗсенӗн йурри шӑвкрав пек йантрат̆,
Ку йантрав кӗвви тӳлек самантра
Ирӗ-тавраллах шӑранса йухат̆.
Шурӑ ӌӑӌӑкпе тумланнӑ ҫӗмӗрт
Вӑрман хӗрривӌен тутлӑ шӑрш сарат̆,
Ҫурхи илемпе ӌӗрӗлнӗ ӗмӗг
Малашне канлӗ пурнӑҫ халаллат̆.

Çак касне Тайпи хăйен пÿртĕнче
Пĕчĕк ачипе ларать йăпанса,
Ачи—Ильуша, амĕш çумĕнче,
Ним те кирлĕ мар, ларать çуйăхса.
Чакка килте çук-ха:
Пĕр ерне çитет, кĕсем кÿршсемпе
Лава кĕршсе карĕç Шупашкар йенне...
Унтан çуркуннех пĕр хуçа килсе
Чĕр тир, ăвăс, пыл пуçтарнăч илсе;
Пухнă тавара ултçиче лавпа
Карĕç тийесе хаç çав хуçапа.
Лава кайансем (Чакка та пĕрле)—
Килме пулнăччĕ пиллĕк кун çинче.
Ак, ситĕ ерне!—килмерĕç темле;
Хуйăха ÿкрĕç весен килĕнче.
Тайпи те çамрах çакă касçлине,
Хура пÿртĕнче тĕмсĕлсе ларать,
Йурă-вăй сасси çеç ун тĕттĕм пÿртне
Шăранса кĕрсе чĕрĕ чун парать.

---

Анчах, ак, сасартăк йурă чăрăнса
Пĕтĕм ачачча чăлпар! салават;
Йатарин йĕкĕт те вăййа пăракса
Килĕ йеннелле хурчка пек чăмать.
Йатарин килте. Кĕрет вăл пÿртне,
Кăн ван пăхкалать, инкĕшне курать;
Шур шĕлепкипе тĕрлĕ халатне
Хывать те çакать, калаçма пуçлать:
— Инке, теп, темле çÿçенчĕк хыпар
Илтрĕмĕр єпĕр кĕçĕр вăйăра;
Хаç анчах Хумпуçрен килекен Йуксар
Калăрĕ пырса: малти катара
Темле хурахсем,
Хĕçлĕ.—пăшаллă, тет, пурте хăйсем,
Выртаç тет канса ĕшне варринче...
Иквиç каç çавсем Хумпуç уйĕнче
Хупларĕç тет, шалт, мĕн пур йалсене.
Кунталлах килĕç, тег Йуксар, весене..
Терĕ Йатарин хыпăвнă саспа.
— Тур сирех усалла, ан килччĕр кунта...
Мĕнлескер вĕсем?!. тейейчĕ Тайпи.
Усал хыпарпа чĕре çÿçенет...
Нумай та тăмасть—хапха уçăлать,—
Йатарин шăлг-шалт, пÿртне пиперет:
Анчах никам мар,- -Чакка таврăнать!
— Акă, вĕт, пичче!.. Çитрĕ хайхискер.
Хурахсем килчĕç тесе еп, темскер...
Лаша тăварас... Лăштах пултăм тин,
Терĕ те тухрĕ, чупрĕ Йатарин.
Такка пÿрте кĕчĕ. Урине салтса
Хăвăрт кĕрсе ларчĕ сĕтел хушшине.
Тайпи уйранпа тип çăкăр касса
Апат хатĕрлерĕ Чаккийĕ умне,
Тата, çул çинчен, шăмшакка кайма
Сăра ăсса парĕ пĕчикçĕ чăмпа...
Йатарин кĕрет лаша тăварса;

Пўртре хаваслӑ халлап пуçланаҭ...

. . . . . . . . . . . . . . . . . .

. . . . . . . . . . . . . . . . . .

Çуллахи кёске çер çутӑ пулин те,
Хый çутса йаҭёç савӑкрах пулма.

V.

Килйыш çывриман-ха. Çуваҭ хыйҭикки.
Пёр Иҗуш кӑва туртӑ ыйӑха.
Халт! туса илҭё пўртўм алӑкки;
Кив пўрт алӑкё те йарри, уçӑлаҭ.
Унҭен те пулмасҭ, ак, кёске самантра
Ултçиҭё çын харӑс кёреççё пўрте.
Ултçиҭёш те йутӑ. Пурин те алра
Киншал, йе пӑшал!...
Вёсенҭен пёрийе тӑлпан, çўллескер,
Çўçпуçё ҭалланнӑ, сухаҗ пысӑккскер,
Тўрех таплатгарҭё Ҭакка патнелле,
Ана çурӑмран вӑл хуллен лўпкесе:
— А, ну кӑ, итлехе есё, аҭамми,
Парҭҭё пире ес апат.—тӑрантар!..
Ыйгиве парсассӑн утаман алли
Сана тивес çук... Мён пур?—тавай, пар!..
Терё вӑл тимлён, хӑйуллан, тискер.
Ҭакка шӑнк хытса кайвине кура,
— Иваш!.. ӑçта ес?—Калаха, пёлтер,—
Терё вӑл хыттӑн, пӑхрё хӑй тавра.
Иваш, тесенех, алӑк патёнҭен
Йалт, сиксе тухрё пёр çамрӑк ҭӑваш,
Утаман вырсла мён ыйтни çинҭен
Ҭӑвашла кала пуçларё ку йаш;
Сикме, хускалма та пёлмерё Ҭакка,
Йупа пек лараҭ вӑл сёгел хушшинҭе:
— Апла-ха, ҭухлап... çтан тупас çукка?!.
Тет те, сисет вӑл, шӑмми-шаккинҭе
Пӑҭҭӑр, сивё тар тухса нўретет;
— Çăккӑр пур... уйран, урӑх ним те çук...
Камсем-ха есир?.. тёрё вӑл хӑйса.
— Хутте кам пулар,—пирёнпе ёç çук!
Тавай ес пире шӑрттан, йе сёт-çу!
Параҭтӑк халех пар, хамӑр лайӑх ҭух,
Унсӑрӑн пуçна çийетпёр, асту!..
Терёç хайаррӑн тискер етемсем,
Тутӑх хёçсемпе вӑҗтваҗт выҗатса
Ҭаккана харӑс хӑмсарҭёç вёсем,
— Ваклатпӑр халех!.. терёç хӑратса.
Пиҭёшне ҭикрёç, тесе хыпӑнса
Йатарин тухса тарма пикенет,
Тайпийё—шар р-ри, йараҭ кӑшкӑрса.
Иҗуш те хыттӑн макӑрса ўкет.
Умёнҭе тӑран утаман пекки
— Ҭарӑнӑр!.. терё. Пурте пит ҭипер.
Шӑп пулса тӑҭё хурахсен пулкки;
Ҭакки те аптраҭ, ҭёнмерё нимскер.
Хай пысӑк сухаҗ калаçма пуçлаҭ;
— Кепёр хурах мар,—ирёк хусахсем.

Нумай, пит нумай ман калас пулаҫ
Епӗр каммине пӗлес тен пулсан,
Авҫах ҫавах та, кӑшт, калам сана:
Ӗлӗк аҫусем савнӑ ыр ҫынна,
Пӑкаҫав йатне ес пӗлетӗн и?
Епӗ ҫав ҫыннӑн йулашки мӗлки...
Авҫах калаҫма пирӗн вӑхӑт ҫук,
Тавай есӗ, пар, ҫимӗҫ—йурварна...
Вӑл ҫапла калаҫса тӑвӑ самантра
Шик! шик!.. шӑхӑртрӗҫ малти ӑрамра:
Ҫав хутрах хайаррӑн—хурах! кӑшкӑрни
Йалтан илтӗнет.—Ҫырлах!.. тет Тайли.
Ултҫирӗ ҫынтан иквиҫ хусахки
Тухрӗҫ те ҫупрӗҫ шӑхӑрнӑ ҫӗре.
— Ей, ирӗк хусаксем, сирӗншӗн пулсан
Ним те шеллӗ мар хамӑн мӗн пурри....
Пӗр пиҫке сӑрам пур, кӑмӑла кайсан,
Лартам та парам сирӗншӗн йури,
Терӗ хай Ҫикка.—сикет те тӑраҫ,
Нар сакне уҫса пиҫке кӑлараҫ:
— Майӗр, ку сире!.. Ӗҫӗр киленсе!
Анҫах ҫиме ҫук терӗ вӑл хӗрсе.
— Е, аван, йураҫ!.. терӗ утаман,
Ларҫӗ савӑнса сӗтел хушшине,
— Ну есӗ, Лавруш, ҫип ҫасрах, ан ман.—
Тупӑр ҫимелли! терӗ йулташне.
Сӳсленҫӗк, хӑйпак, ҫӑславкӑ Лавруш
Тухаҫ те ҫупаҫ... Ҫӳҫенҫӗк, хӑруш!

* * *

Тул ҫутти килет. Сӳнет хыйҫикки.
Ҫакӑ самантрах уҫӑ алӑкран
Пиллӗк улт хусах кӗреҫҫӗ пырса;
Пӗринҫе иквиҫ ҫӑмӑркка шӑрттан,
Теприн йӳҫ пылпа тултарвӑ катка.
— Хуралсем сыхӑ—ларсах ӗҫсе ҫи,
Терӗҫӗ вӗсем ват утамана.—
Кусем тиоӗ аш, ку пылпӑ йӳҫҫи,
Лартрӗҫ те паҫӗҫ мӗн пурне ӑна.
Тинех хусаксен тӗнҫи уҫӑлаҫ,
Таштн те йурри те вӗсен пуҫланаҫ;
Умра пурриве ӗҫсе пӗтерсен,
Каллех йӳҫӗ пыл тупрӗҫ кӳршӗрен.
Ватӑ утаман хӑйпе йувашар
Сӗтел хушшине ларгаҫ ҫаккана,
— Ан хӑра манран, пупле, паллашар!.
Тесе вӑл хавас пуҫлаҫ халлапа;
Калаҫ вӑл—аҫаран улпут аллинҫе
Ҫӗрӗҫпе пиҫсе хӗн курви ҫинҫен,
Ҫамрӑклах канатпа Атӑл хӗрривҫе
Паршӑсем туртса ҫӳрени ҫинҫен;
Калаҫ вӑл—йеппе Пӑкаҫав тухса
Атӑл тавраш не кисретни ҫинҫен,
Ҫирӗм ик ҫултах унпа ҫыпҫӑвса
Улпут тавраш не ҫӗмӗрни ҫинҫен;
Каласан, каласан, урнӑ пек пулса:

— Çук, ĕнт, Пукаҫов! çирĕç ун пуçне!..
Çирĕм çул çитрĕ, епĕр унтанпа
Виççĕн çеç йултмăр çавă ушкăнра;
Çуретпĕр ишсе тек сĕм сĕм вăрманпа
Сăрган Атăла, Атăлтан Сăрра.
Терĕ вăл хыттăн пўрте йантратса.
Тайпипе аҫи те, ĕнтĕ, лăпланса
Хĕсĕвҫĕç таçтах тĕпел кĕтесне,
Шиклĕ Йатарин викам туймасла
Ҫăмрă, ĕнт, таçта çăва шăтăкне.
Еçсе пуçĕ хĕрчĕ сивлек утаман
Тăгăшах тăрат, угса çаврăнат,
Йăвăр шухăшсем пусма пуçласан
«Атăл йуррине» йантратса йарат;
Ие, тăтăш, хăйне вăл çамкивҫен çапса
Хыттăн кăшкăрса, калат куҫанса:
— Ей Пахом, Пахомкă!—пурнăçу наҫар...
Ирĕкшĕн тăрса хĕсрĕн кунçулна;
Йалсем те, уйсем те, ĕнтĕ, саншăн мар,—
Ак, ĕнт, çирĕм çул йĕрлеççĕ сана!..

* * *

Хĕвел хăпарса йарах çутăлат.
Утаман тинех тăрса кăшкăрат:
— Ну, ирĕк хусахсем!.. хусканас пулат,
Ав хура вăрман хумханма пуçлат,
Хĕвел те хĕртет,—хускалăр, çитет...
Сĕм вăрман пире пaçăрах кĕтет...
Пĕр çармăк хусахĕ сăрнай калараса
Мĕкĕртрĕ виç хут тăп йал çинелле,
Нумай та иртмерĕ, мĕкĕртнĕ сасса
Пыҫĕç пухăнса углă хусахсем.
Вĕсевҫен пĕрисем хăйсемпе пĕрле
Пыҫĕç çавăтса матур Итрене.
Итрен вăл кĕҫҫĕ, Алапит аҫи,—
Хыг хурахлатнă ăрама тухса,
Анҫах ăнмасса (тулҫĕ ун шалҫи),
Хурахсем ăна тытрĕçĕ хуса.
Итрене хăй умне пырса тăратсан,
Утаман сивĕн пăхат те калат:
— Манкаллă, аҫамккă, ес ма кăшкăран?
Витас-и сана?.. Шалкă?.. е е е, хăрат!..
Хăрат вăл, йарăр!.. терĕ вăл кулса;
Пĕр çĕтĕк хусах çех иквиççĕ çупса
Тĕкрĕ те йаҫĕ хытнă Итрене.
Ку вара аран тĕрнет пўрт çумне.

---

Ҫаккана тав сунса аллине парсан,
Вăрăммăн хашлатрĕ ватă утаман;
Унтан вăл вăш-вăшт лашине тытса
Йĕкĕт пек çăмăллăн ларат утланса.
— Ну, сывпул, аҫамккă!.. Пуçсем ҫĕр пулсан
Курăпăр ха каллех, терĕ вăл аран.
— Ăçталла карăр ха? тесе ыйтсан,
— Çил çталла вĕрет,—епĕр те унта,

Терĕç те вĕçтерҫĕç вĕсем ку йалтан;
Йантрав кăна йулҫĕ çумри вăрманта.

---

Хусахсем кайсан йалти халăххи
Ватти вĕтти пех хăпрĕ ăрама,
Пурин те çунатлă сăмах йумаххи
Пĕрре çине иккĕ ӳсрe хăпарат.
Никама та мар, усал хурахсем
Алапите çех шар [1]) турĕç ытла,
Мĕнпур укçине, пур мулне тĕсем
Çаратрĕç унне,—тĕп турĕç çапла...
Утмăл тенк кĕмĕл!—сахал укçа мар,
Ăна пĕр пуссăн пуçтарнă вун çул;
Хусахсем тунă куя пек пысăк шар
Йалйыш тĕкмесен пулма пĕлес çук!
Ҫакка патĕнҫе ĕçсе çинĕрен
Алапит ăнак йувава хурат,
— Çавах тĕп турĕ, тесе ун çинҫен
Шалăпă пама кантура ҫупат.

---

[1]) Шар—инкек.

# ТӲРЛЕТНИ.

Çак поемăн („Сунтал" шурналсен 8 пе 10 мĕш нумĕрĕсенҫе тухнă) малтанхи сыпăкĕсенҫе йăвăшсем çапăнвă: 8 № те, 24 стран. çӳлтен 1-мĕш йĕркере „Çынни ҫурлĕскер" тесе çапăннине „Çынни ҫиперскер" тесе вуламалла; 22 стран. айалтан 9 йĕркере «такăр йур айĕнҫе» тенине,—„такăр йур çинҫе" темелле.

10-мĕш № те 23 стран. айалтан 21 йĕркере „епĕ тӳрех" тенине—„епĕ тӳп-тӳрех" темелле; 24 стран. йулашки йĕркере „Йатарин йатне" тенине—„Итапай йатне" темелле.

# Ђăваш историнт̧и т̧аплă сиес.



Курйĕв—Çĕрпў уĕçтăвком претçетаттĕлĕ, сиес телекађĕ.

Йанварĕн 26-мĕшĕнђен пуçласа 31-мĕшне çитетђен, ултă кун хушши, Ђăваш респуплĕкĕн тĕп хули савăнăçлă, паллă кунсене пурăнса ирттерђĕ.

Шупашкар—ĕлĕкхи ĕмĕрте ђăваш ĕçхалăхĕшĕн ытла та сăнсăр, тĕксĕм хула, ђăваш ĕçхалăхне «палламасăр», ун тан мăшкăласа пурăннă хула, çав Шупашкарах пайанхи кунсенђе палламалла марах улшăннă, ытла та савăнăçлă, илемлĕ тум вăл тумланнă. Ђăваш ĕçхалăхĕ Аслă Октăпĕр Револљуци пама ирĕксене сыхласа тăрса, вĕсене çирĕплетсе пырассишĕн кĕрешнине хăйĕн тĕп хулипе, Шупашкарпа, çыхăнтарђĕ. 4—5 çул хушшинђе Шупашкар ђĕнах та ђăваш ĕçхалăхĕн хулин сăн сăпатне илђĕ, 4—5 çул хушшинђе Шупашкар ђăнах та ђăваш ĕçхалăхĕн куљттура ђенттăрĕ пулса тăђĕ. Кунта ђăваш ĕçхалăхĕ çак иртсе кайнă кĕске вăхăтра, йăвăр саманара, мĕн тума пултарни, мĕн-мĕн туса çетерни—пур те курăнаť. Рапфакĕ те, мусейĕ те, вăтам шкулсем те, театтăрĕ те, хаçађĕ те, кĕнеке кăларасси те... Ђăваш ĕçхалăхĕн пĕтĕм пуç мимийĕ Шупашкарта халь... Ытла та савăнăçлă кунсем пурăнса ирттерђĕ Шупашкар çак иртнĕ кунсенђе. Вĕт ђăваш тĕп хулине ђăваш çĕрĕн пур тĕттĕм кĕтессинђен те ђăваш ĕçхалăхĕ уйăрса йанă çынсем ђăваш ĕçхалăхĕн пурăнăçне хăпартасси çинђен, ăна тĕттĕм шăтăкран тухма пулăшса, çутă пурăнăç çулĕпе мĕнле майсемпе илсе пырасси çинђен сўтсе йавма пухăнђĕç çак кунсенђе ђăваш тĕп хулине! Ђăваш респуплĕкĕн çĕнĕ, çамрăк, халь анђах пурăнма пуçлаккан Респуплĕкĕн 1-мĕш Сиесĕ пулса иртрĕ вĕт Шупашкарта çак кунсенђе!

* * *

Сиес уçăлнă кун. Нихăçан манмалла мар ђаплă кун... Ђăваш тĕп театтăрĕнђе. Кăвакăн—симĕсен—хĕрлĕн çунакан електриђĕства ламписемпе илемлетнĕ театтăр ăшĕнђе калама та çук кăмăллăн, ăшшăн туйăнаť...

Ђăваш Тĕпĕçтăвкомĕн претçетаттĕлĕ—Илларионов йулташ сиеса уçас умĕн, вăл историре ђаплă вырăн йы-



Сиес телеђађĕ Халиме (тутар хĕрарăмĕ) Шăнкăртам вулăсĕнђен, Патĕрйел уйесĕ.

шăноса тăмалла сиесăн сатађђисене кăтартса, çапла каларĕ:

Нумайђђен кĕтке ђăвашсен историнђи пала кун çитрĕ. Çак палла кун кирек камăн та хамăрăн ĕлекхи кунсене аса илмесĕр йулас килеймĕ. Ђăваш ĕççыннисен пурăнăçĕн çулĕ çинђе 3 палла сыпăк пулнине ĕпĕр курса тăратпăр. 1 мĕш сыпăкра, Октăпĕр революђутси пуçланнă хыççăн, тĕрлĕрен вак халăхсем хăйсен пурăнăçне хăйсем майлă туса пырасси çинђен шухăшлама пуçларĕç. Çав вăхăтра пирĕн ђăвашсем те тĕрлĕрен оркависатсисем уçма тапратаççĕ. Хусанта Тĕп Ђăваш Пайĕ усăлат̆.

Унтан 2-мĕш сыпăкра ђăваш ĕççыннисем хăйсене вађђи автономи илесшĕн, Ђăвашсен Автономиллĕ Оплăçне тăвасшăн тăрăшма пуçлаççĕ. Ђăваш ĕççыннисем ыйтнине аса илсе, ђентр 1920 мĕш çулта ђăвашсене автономиллĕ оплăç туса пађĕ. Ђăваш оплăç пулнăранпа 5 çул иртрĕ. Ђăваш оплăçĕн хуçайстви вăйсăррине кура, унăн пурнăçĕвђе сапланайман тăкаксем (тефитсит) пулса пынине кура, Ђăваш оплăçĕнђен республĕк тăвас ыйту сиксе тухрĕ... Елĕр ыйтнине ђентр пама пулђĕ. 1925-мĕш çулта апрелĕн 21-мĕшĕнђе вăл текрет кăларђĕ. Вăл текретпа Ђăваш оплăçĕн ђиккисене аслăлатса парса, автономиллĕ республĕк туса пађĕ. Çак икĕ палла кун, апрелĕн 20 мĕшпе пайанхи кун, ђăваш историнђи ђи палла кунсем пулса тăраççĕ. Улагăр уйесĕнђи ĕçлекенсемпе хресђенсем пирĕн республĕка куçрĕç.

Халĕ ĕнтĕ пирĕн умра Ђăваш республĕкне тĕреклетес, унăн пурăнăçне лайăх çулпа йарас сатађђă тăрат̆.

Ку сиесăн ытти сиессенђен уйрăмĕ пурри курăнсах тăрат̆. Кунта, ђи малтан, ђăваш ĕççыннисен прегставиттĕлĕсем нумайрах пухăннă. Ку сиесра пирĕн советсене тĕреклетесси çинђен, çар ĕçĕ çинђен сутсе йавмалла пулат̆. Кун пек ыйтусене епĕр пирвайхи хут советсен сиесĕнђе сутсе йаватпăр. Пирĕн кунта советсене тĕреклетес ыйтăва тĕпђесе тухса, мĕн тунине, мĕн тумалливе шутласа хумалла, çитменлĕхсене тӳрлетмелли майсем тупса хăвармалла пулат̆. Çар ĕçĕ çинђен епĕр Советсен сиесĕнђе сутсе йавманђе, халĕ сутсе йавмалла пулат̆. Вăл мĕнтен килет? Пирĕн Совет Союсне ыран-пайанах тăшмансем хупăрласа илессине кура мар епĕр çак ыйтува сиес кун йĕркине кĕртетпĕр. Совет влаçĕ халĕ çар шутне ђакарса пырат̆. Çав майпа пирĕн умра салтака каймалли çамрăксене çар ĕçне вĕрентес сатађă тухса тăрат̆. Çавăнпа та ун çинђен пирĕн çак сиесра канашланмаллах пулат̆.



Телекат Алексеййĕв Йетĕрне уĕçтăвком претçетаттĕлĕ.



Сиес телекаđĕ Влатимирова Шĕнерпуç вулăсĕ, Шупашк. уйесĕ.



Телекат Сахаров „Иетинствă“ хапрăкĕнҫе ĕҫлекен.

Кунта тата еҫĕр Ҫăваш респуплĕк правитĕлствин отҫотне итлĕпĕр. Вăл та пит паллă ыйту. Пирĕн Ҫăваш респуплĕкĕнҫе ҫĕрте вăрман ый ăвĕсем ҫăваш ĕҫҫыннисемшĕн ҫи пахă, ҫи кирлĕ ыйтусем пулса тăрасҫĕ, мĕншĕн тесен Ҫăваш респуплĕкĕнҫе пуринҫен ытла хресҫенсем пурăнасҫĕ. Ҫавăнпа ҫĕр хуҫайстви ыйтувĕсем ҫинҫен сиес ҫителĕклĕ сутсе павса хресҫен пурăвăҫне ҫăмăлла малли майсем туса парĕ. Унтан тата хамăрăн промышлĕнăҫа хăлартасси ҫинҫен те сиес хăйĕн шухăшĕсене тĕплĕн каласа хăварĕ. Пуҫшег пирĕн наҫăр. Пур ĕҫе те укҫатенкĕсĕр тума йăвăртарах. Ҫавăнпа сиесăн кăҫалхи пуҫшег ҫинҫен пит тĕплĕн сутсе йавассине шансах тăмалла.

Тата ҫак сиесра еҫĕр ҫăваш историшĕн ҫи паллă ыйтува — Ҫăваш респуплĕкĕн тĕп саккунне йышăвăпăр. Хамăрăн правитĕлства суйласа лартас ыйту та пит паллă ыйту пулса тăратĕнтĕ. Ҫăваш ĕҫҫыннисен пурăнăҫне лайăхлатас ĕҫ, ҫăваш хуҫайствине вăйлатас ĕҫ ҫак ыйтува тĕрĕсрех туса иртерринҫен те килет. Кунта килнĕ телекатсем ҫак ыйтусене тĕплĕрех сутсе-йавса, лайăхрах шухăшласа туса пырассине шанса тăратпăр.

Ҫăваш респуплĕкĕ сывă пултăр!

Пусмăртисене ирĕк паракан Комуниссен парттийĕ сыв пултăр!.. тесе йантăраса кайрĕҫ Илларионовăн йулашки сăмахĕсем.

Сиеса тĕрлĕ орканисатсисенҫен саламсем нумай каларĕҫ, парнесем паҫĕҫ. Улатăрти ҫукун ҫул ҫинҫе ĕҫлекенсем парнелĕхе пĕр паравус тўрлетсе хатĕрлесе, йанварĕн 28-мĕшĕнҫе ăна Канаш стантсине ҫитерсе паҫĕҫ..

* * *

Йанварĕн 31-мĕшĕнҫе, ултă кун хушши ĕҫленĕ хыҫҫăн, Ҫăваш респуплĕкĕнҫи Советсен пĕррремĕш Сиесĕ хăйĕн ĕҫĕсене пĕтерҫĕ. Ҫăваш ĕҫхалăхĕн историнҫе ҫи палла вырăн йышăнса тăракан пĕрремĕш Сиес хăйĕн ĕҫĕсене те пит ҫаплăн туса ирте рҫĕ. Ҫăваш респуплекĕнҫи Советсен 1-мĕш Сиесне уйрăмăнах палăртса тăракан ĕҫсем ҫаксем:

Ҫи малтан—Сиес ĕҫĕсенҫе. сиесăн кашни ыйтăвĕнҫех ĕҫлекенсемпе хресҫенсен сойусĕ ытла та кирлĕ, вăл ытла та ҫирĕппи, ăна тата хытăрах ҫирĕплетсе пыма ҫăваш ĕҫхалăхĕ хатĕрри ҫуттăвах палăрса тăҫĕ. Йалтан килнĕ хресҫен сăмахĕсем те, станок ҫумĕнҫен килнĕ ĕҫлекенсен сăмахĕсем те, Сиес йышăннă ресолутсисем, сиесĕн пĕтĕм хавасĕ те ун ҫинҫен астутарса тăҫĕҫ.



Карсаков.—Шăнкăргам вулăс телекаҫĕ.

Ленин вĕрентсе хăварнă ĕçе ытла та хастарлăн тăрăшса, пурнăçа кĕртсе пымаллине кăтартрĕç.

Иккĕмĕш паллă йапала—тĕрлĕ ҫĕлхĕпе калаçакан ĕçхалăхĕн пĕр пек пĕрле ĕçлемелли, тĕрлĕ халăхсем хушшинçе хирĕçӳсем, килĕшӳсĕр ĕçсем пулмалла марри. Ҫăваш респуплĕкне кĕркен тĕрлĕ халăхсем (тутарсем, мăкшăсем, вырăссем) пурте пĕрле, хирĕçмесĕр, килĕшӳллĕ ĕçлесе тăма пултарни, вĕсем ăна тума ҫĕререн хаваслакса çунни,—Сиеса килнĕ тутарсен, вырăссен, мăкшăсен, ҫăвашсен сăмахĕсенҫе те, Сиес йышăннă ресоҫутсисенҫе те ытла та ҫиплан палăрса йулҫĕ.


Телекат Осиппăв, Кĕвĕшпуç вулĕçтăвком преçсетаттелĕ Çĕрпӳ уйесĕ.

Виççĕмĕш паллă йапала вăл—пирĕн Ҫăваш респуплĕкĕ хайне уйрăм пĕҫҫен тăракан респуплĕк марриве кăтартакан йапала. Пирĕн Ҫăваш респуплĕкĕ, пирĕн ҫăваш ĕçхалăхĕ Совет респуплĕкĕн Аслă Сойусне кĕрекен тĕрлĕ халăхсен çемйинҫе хăйне тивĕçлĕ вырăнне йышăнса тăрать. Вăл ҫăвашах апла иккенне—Сиес уçăлнă кунак тĕрлĕ респуплĕксенҫен илнĕ саламсем пит аван кăтартрĕç.

Сиес уçăлнă кун тĕрлĕ Респуплĕксем йанă телекрамсене вуласа кăтартнă ҫух вăл ытла та хыттăн сиснĕҫĕ. Сиеса Тутар респуплĕкĕнҫен йагарласах килсе, салам каларĕç. Пушкăрт респуплĕкĕнҫен, Крымрен, Иаккут респуплĕкĕнҫен, Такестанран, Аçерпайтшанран, Кăркассемпе Касаксен респуплĕкĕсенҫен, Вотйаксен оплăçĕнҫен, Карели респуплĕкĕпе Атăл çинҫи Нимĕç респуплĕкĕнҫен, Сыртан респуплĕкĕнҫен телекрамсем йанă.

Тăваттăмĕш паллă йапала вăл—Ҫăваш ĕçхалăхĕн массийĕ Совет ĕçне тăвассине, хăйĕн пурăнăçне хăйне кирлĕ пек тума хĕрсех пуçланине кăтартса тăракан ĕçсем. Ҫăваш ĕçхалăхĕн аслă пуххинҫе йалтан килнĕ хĕрарăмсем—сурпанпа, хĕрлĕ кĕлепе, çăпатапа туха туха хуçайствă ыйтăвĕсем пирки каларĕç, тĕрлĕ усăллă майсем йышăнма сĕнҫĕç. Сукаллă хресченсем, станок çумĕнҫе ĕçлекен рапоҫҫисем Совет ĕçĕ çинҫен ҫăваш пурăнăçне аталантмалли майсем çинҫен хăйсен килĕнҫе хăйсен тăванĕсемпе калаçнă пек туха-туха каларĕç. Сиес йалхуçайстви пирки, промышлĕннăç пирки, пӳтшет пирки йышăннă ресоҫутсисенҫе—ҫăваш ĕçхалăхĕн пурăнăçне хапăртмалли майсем çинҫен ҫăваш ĕçхалăхĕ хăй калатă хăварнă сăмахсем тĕплĕнех вырнаçса йулҫĕç.

Иулашкинҫен пĕрремĕш Сиеса уйрăмăн палăртса тăраканни—Ҫăваш респуплĕкĕн тĕп саккунне, конçтитутсине йышăнни. Ҫăваш ĕçхалăхĕ Аслă Октăпĕр Революҫутси хыççăн пысăк ирĕксем илсе, çултан çулах ӳсе пырать. Ҫăваш ĕçхалăхĕ хăйĕн пурăнăçне хăйне кирлĕ пек туса пыма пит пахă, ҫаплă çул çине тухрĕ. Ҫăваш респуплĕкне тунă малашне ҫăваш ĕçхалăхне Совет ĕçне йертессине, хăйĕн хуçайствине (пурлăхне) хастарлăн ӳстерсе пырассине тата çирĕплĕнтерех, тата хăвăтлăнтарах туса пыма сарлака çулсем уçса парĕ.

Çаксем ĕнтĕ Ҫăваш респуплĕкĕн Пĕрремĕш Сиесне уйрăм вырăна тăратса, историре паллă вырăн йышăнтарса тăракан ĕçсем.

* * *

Ҫăваш респуплĕкĕнҫи Советсен пĕрремĕш сиесне мĕн пурĕ 189 телекат килнĕ. Вĕсенҫен ĕç т ма пулгаракан сасăпа 95 çын, кавашлакан сасăпа 94 çын. Мĕн пур телекатсенҫен 164-мĕ профсойуссенҫе тăраççĕ, 25-шĕ проф-

войуссенӗ тӑмасҫӗ. Ҫӗр ӗҫӗпе пурӑнакансем 108, ӗҫлекенсем 27, интеликентсем 18, т. ыт. Арҫынсем 171. хӗрарӑмсем 18. Партти тӗлӗшӗнҫен—ВКП ҫлевӗсемпе кӑнтитатсем 140, комсомолецсем 4. парттирӗ тӑманнисем 45. Натси тӗлӗшӗнҫен—Ҫӑваш 147, вырӑс 34, тутар 4 ирҫе 2 Ҫулсем тӑрӑх—25 ҫула ҫитиҫҫӗн 27, 21—40 ҫула ҫитиҫҫӗн 136, 41—60 ҫулхисем 25. 60 ҫултан иртнисем 1. Вӗренӳ тӑрӑх—аслӑ шкулсенҫен тухнисем 11. вӑтам шкулсенҫен 55, кӗҫӗн шкулсенҫен 116, ытнисем 7.

# Н. И. Уҫ, поета сума суса.

Хурама та ҫӑпка, ҫӗмӗрт сиктӗрме—
Ним пӗлмесӗр выртнӑ ел ун ҫух.
Тӑван ҫӗлхем ре капла ӳстерме
Пӗр пуҫра та шухӑш пулас ҫук.

Йӗри тавра мӑшкӑл. ахлату, куҫҫуҫ...
— Ҫиҫӗ йуг ес! тетҫӗҫ вӗт пире.
Сахал пуҫ ҫав ӗнтӗ, сахал йулҫӗ пуҫ
Ҫун хавалӗ ҫирӗммӗш ӗмӗре.

Ах-ах ах темесӗр сывлӑш та тухмасӗ,
Пӗр асапсӑр ҫун та тухас ҫук.
Ҫӑваш ҫынви те ак пайан макӑрмасӗ,
Пайан—ирӗк хӗвел савнӑ ҫух.

Микулай Иванҫ Полоруссӑв—Уҫ!
Ҫирӗм ҫул ес шур хут тӗрлени
Кӑлӑхӑ пулмарӗ, мӑнтарӑн ҫул пуҫ:
Савӑнтарҫӗ ҫӗлхе ҫӗрӗлни.

Микулай Иванӑҫ Полоруссӑв—Уҫ!
Мӗн сунам сана та мӗн калам?
— Ҫӗлхемӗре усрӑн, малашне те уҫ.
Ҫакна ҫеҫ ҫуптан ел сӑвӑлам.

Ес йурланӑ ҫух вӗт выртнӑ сӑпкара,
Пайан хам йурлатӑп—ҫамрӑк пуҫ.
Тавтапуҫ, ҫулпуҫӗ! Тав йупиҫӑра!
Ҫирӗм ҫул йурришӗн тавтапуҫ!

Хусанкай.

# КРИТТĔККĂ ПАЙĔ.

Солăттăв М.

**И. Алексейĕв калавĕ.** «Иурлама вĕренекен» «Сунталăн» 8 (14), 9(15) мĕш №№-сенђе çапăнвăранпа шурнал вулакана пурне те „йурлама вĕревтет“.

Ĕç 1913-мĕш çулсенђе пулнă курăнаť.

«Ваньќка кĕркуннеќ Мускава вĕренме кайас тесе шухăш тытнăђĕ, анђах.... Мускав вырăнне Ђĕмпĕрти ђăваш шкулне вĕревме килсе кĕђĕ».

Анђах Ваньќкан ђунĕ Мускаваллаќ тапнă «Унăн пĕђĕкренех сасси аван пулнă», тет ха вет сыракан.

«Ваньќкан ашшĕ амăшĕ, вĕсем (Ђĕмпĕрте вĕренекен Елексей ашшĕ-амăшсем) çинĕ хыççăн йулнă йўçнĕ йашкана çисе пурăнаççĕ».

Мункуна киле тавăрăнма Ваньќка аппăшĕнђен укçа ыйтса йанă. Мункун умĕн вăл çавăнпа «Çук, аппа укçа йамарĕ», тесе пăшăрханаť. Çыракане—Аппăш укçа мар—çыру та йамарĕ, тет. Анђах аппăшĕ киле «Ваньќка патне хаћ мункуна килсе кайма вун тенкĕ укçа йатăм... тесе çыраť, аппăшĕ унăн хĕрарăм учитлĕ вĕт, çавăнпа та унтан «ăна вун кĕрепенкке салат илме хуш аћћи» текелесе укçа сăрхăтаççĕ килтисем.

Çапах та Ваньќка тĕрлĕрен «жульничество» тенĕ сăлтавсемпе «Симбирск Урмары» „хырса хуратса“ Москва“ тесе çырса хурса „Симбирск Москва“ туса;„ лартаť“.

Кун пек „шулĕксене“ кашни пусăмрах тытаканђĕ, анђах... капла пулсан та ултав хутпа

„Вăтăр сехетрен Ваньќка Мускава çитрĕ“, „камертгон хыççăн шăнкрав сасси пек ђăсма тытанђĕ“, „Учитлĕсем тĕлĕнсе кусне (кусĕсене мар) ђарса çăварне (çăварĕсене мар) кара пуçларĕç“, унтан Ваньќка „елхерей патĕнђе хĕрарăм сассине“ илтет, кайран „пигĕ ђипер вунçиђĕ çулхи манашкă елхерей тўшекĕ çинђе выртнине курђĕ“ ун хыççăн „боже царя храни“ йурларĕ.

Елхерей кăна—„Ах ниќĕмĕш Ломоноссăв, ăçта ўснĕ есĕ? терĕ“, тет çыракан.

Унтан çак „Ломоноссăв“ киле тавăрăнма тытăнаť, çул çинђе пуйăс айне пулса вилме тăрăшаť, (темшĕн ĕнтĕ? С. М.), анђах ĕçĕ (пуйăс айĕнђе лапђăнасси çăмăлах мар çав!) тухаймав. Килĕнђе, çĕр виçнĕ çĕрте, ашшĕне хĕненĕ, вилес патнех çитернĕ. Калав çак шухăшсене кăна параť, урăх йапаласем çинђен каласшăн пулни çавăнтах пăсланса пĕтсе тĕксĕмленет.

Вĕренекен ађан пурнăçне илемлетнĕ сăмах çавăрнуçĕсенђе çырни аван ĕç ĕнтĕ вăл. Анђах пĕр-пĕр ĕçе тытăнсан ăна вĕçне çитерме пĕлес пулаť, çитменне тата пĕр сăмахпа тепĕр сăмаха çыхма пĕлмелле, ахаћтен мар ђăвашсем „кĕтçе пултăр сыпăклă, сăмах пултăр татăклă“,—теççĕ.

Кам Ђĕмпĕр шкулĕнђе вĕренекен ађасен пурнăçĕ çинђен çырас тет, унăн çав шкулри, çав вăхăтри йăласем, меслетсем çинђен суйса мар, тĕрĕссипе çырмалла, вăл йапалан пурнăçне уç тупанĕ çине кăларма пĕлмелле.

1. „Епĕ ђерет тăрăх апат пĕçерне“,—тени тĕрĕс мар вăл, апата повăрсем пĕçернĕ, ађасем ђеретре кăна тăнă.

2. „Ђуп Тимухха Хĕветĕрĕ патне сехет миçине пăхма“—тет Ваньќка Елексейĕ.

— Тимухха Хĕветĕрĕн ђассийĕ пăсăлнă, çўремест тет; ураписем хушшине тараккан хĕсĕннĕ темскер, тасатса лараť. Çавăнпа ђас килеймерĕм. Пĕр çур сехет вăл тасатнине пăхса лартăм....

Пăхса ларнипе, çыракан шутĕпе, вăхăта вичçĕ ĕнтĕ. Çĕмрĕк ҫассийе йусанă вăхăтра вăхăт пĕлес тесен çур сехет кĕтсе лармалла иккен, унтан:

— Хаҫ виç сехет çур кăна вăхăт, теме те сăлтав пур. Кун пек тамашасене пайан тин илтетпĕр. Тимухха Хĕветĕрĕн пăсăлнă ҫассийĕ вăхăт кăтартма пултарайман иккен. Ку мар пире урăх йапала ытларах тĕлĕнтерет, çыракан хăйĕн пуçĕнҫи ҫасси пăртак пăтранса кайни, калава кугăн пуçăн çӳретет.

Вăхăт пĕлме кăриторта ҫасси çакăнса тăни такамшăн та паллă, çыракан та ăна пытарса хăвараймав, вăл:

— Криторти пысăк ҫасси вунинккĕ çапрĕ.—тесе хурать пĕр тĕлте:,. Криторти" ҫасси кашни çур сехетренех çапать пулсан вăхăт пĕлесшĕн çӳрени те кирлĕ мар, пустуй апалавни кăна, çитменне вăхăт пĕлес тесен Тимухха Хĕветĕрĕ патне кайас çук çинҫе „пысăк ҫасси" çакăнса тăрать.

Пуçри ҫасси çемĕрĕлсен калав „сĕрмен урапа кăшкăрни" пулать çав. Малтан пуçри ҫассин пайĕсене тĕрĕслесе пăхас пулать, ун хыççăн тин калав çырмалла пек туйăнать пире.

3. Талонсене хуратса хăтланнисене йумахри пек туса çырасшăн пулнă курăнать, çавăнпа та калав та йумахалла пулăннă.

4. Ваҫккан „йулнă йӳçнĕ йашкасене (çын йашкипе пурнакан) çиекен аппĕ-амăшĕ" пĕтĕм йала тĕлĕнтерекен ĕçкĕçĕм те тăваççĕ иккен, ĕçкинҫе

— „Айта инке вăрмава. хура çырла пуçтарма", тесе кĕрĕлтеттереççĕ.

Ваҫкка амăшĕ вăл вăхăтра:

— Ĕçха ĕнтĕ, ĕç, Евтук! тесе куркасене сăра тултарса çӳрет. Ку йапалан пĕр йенĕ тăклан, тепĕр йенĕ ылтăн иккен. Кун пек пысăк йапаласене пĕлменҫĕ ку хутăра.

5. Пĕрпĕр ҫăв пулнă йапала, ĕç çинҫен çырас пулсан тӳрех „çавăнта, çапла пулнă ĕç" тесе хумалла. Вăл ĕçе калавла туса çырас тесен хăй сăнсăпатна малти ретелле ытла ан та тĕк, çынсене те Ваҫкка (урăхла И. Алексейĕв), Елексей (Алексей Алексавтрăв), Мишша Алексейĕв, Тимухха Хĕветĕрĕ тесе тӳрĕ йаҫĕсемпе ăн кала, апла сан калав пулмарĕ вара, йе (воспоминание, мемуары), т. ы. çавăн йевĕрлĕ йапала пулса тăрать.

6. Ваҫкка хăйĕн çинçе сассипех, Мускава пойăспа кайнă пулин те, хăйне хăй:

— „Ах, иккĕмĕш Ломоноссăв, ăçта ӳснĕ есĕ" тетерттерсе Ломоноссăв пуласшăн, анҫах ку йумахра Ломоноссăвлăх нимле ĕç туни те курăнмасть-ха.

7. Ваҫкка мĕншĕн пойăс айне пуласшăн шут тытвăши? Автăр ку тĕлĕшпе хăйĕн сикҫĕллĕ йумахне „Сиктерĕш" (сикекен шыв) тенĕ çĕрти шыв сикнĕ пекех сиктерет (вулакансен пуçĕсем пăтранҫăр, тет пулмалла ĕнтĕ).

8. Ваҫкана хăйне „Ломоноссăв" туни çитмест, вăл пиҫĕшне те, ашшĕне те революционер туса хурать.

Ваҫкка ашшĕ:

— Мавăн вилсен те йурать. Анҫах манăн ĕç, тин çеç кăварланма пуçланă революци ĕçĕ, мавран йулать, тет.

Ку 72 çулхи çынвăн сăмахĕ, пĕр 1914-мĕш çулхи çуркувне пулнă. Çынни йалтан тухса курман, пĕрпĕр парттинҫе тăракан революцийе йертсе пыракан пуçлăх пекех калаçать. Хăйне Ломоноссăв тунă хыççăн ашшĕне те пуçлăх тумалла ĕнтĕ.

Ку йумахра (йумахри пекех) ерхелей 17 çулхи хĕрпе калаçнине те Ваҫкка туйать, курать; ăна (Ваҫккана) нимĕнсĕр мĕнсĕрех пуçлăхсем тумтирсем, атăсем параççĕ; йе тата пĕтĕм ырри Мускавра, пĕтĕм усал Ҫĕмпĕрте тевине çутатасшăн Ваҫкка; анҫах ун пек кăлтăксем çинҫе ҫарăнмастпăр та пулĕ, мĕншĕн тесен ку йапала йумахран та йумах ĕнтĕ, анҫах ҫĕлхе тĕлĕшĕпе ку йапала йумахран çитмĕл çиҫĕ сыпăк пăсăкрах, çулламан пăру тĕкĕсем те „Йурлама вĕренекен" тенĕ йумахран илемлĕрех пулмалла.

Иулашкинҫен, ку йапала мĕн çинҫен калама пултаратши? Ку йапала ҫăваш ҫĕлхинҫен кулниве („пуçĕнҫен урапа тимрипеле тăрăнтарса йаҫĕ",— „çӳç тымарĕсем (!), çăварти шăлсем сасартăк ыратма пуçларĕç", „алăка халăх çиве çапнă пек", т. м. те), атă йăвалакана кукăҫ пĕçерме хушнине, ку-

кăҫ пĕҫерезене атă йăвалама хушнине пĕлтерет. Ку тĕлĕшпе „ҫупҫине кура хупăлтри" тесен те намăс пулас ҫук.—Ҫăваш „Ломоносовăвĕн" калавĕ „Ломоносовăвлах" тухнă иксен. Илемлĕ сăмаха ку „калав" пыҫҫăклă лупашкари ҫăхăр ăшне кĕртсе пăрахаĭ.

С. Малинниккăв. «Ленин ҫулĕпе».... „Сунтал" (7) мĕш №-р Малинниккăв—ҫĕнĕрен ҫигĕнекен самах патăрĕ вăл. Унăн пуплевĕ кĕске, авăк пит ҫаврăнăҫуллă, ҫăре тĕпнех кĕрсе вырнаҫаĭ. Малинниккăв пек йапала ҫинҫен йĕркеллĕ, аван, кирлĕ пек ҫутатса паракан ҫăваш ҫыраканĕсем хушшинҫе тĕл пулманха епĕр. Ҫыракансем пирĕн ытла сахалах мар, вĕсем аван ҫыракансем те пур, Малинниккăв вĕсем хушшинҫе паллă вырăн йăшăнса тăраĭ, анҫах унăн кĕнеке ҫине ҫапăннă калавĕсем нумай мар, пĕри „Ленин ҫулĕпе"... тепĕри „Хисеплĕ вилĕм" йатлă пĕҫĕк пйеса. Ку икĕ йапала Малинниккăвра сăмах хуҫи пурăннине, пурнăҫа ăнлаканан, ăна пĕлекен ҫын пурăннине пĕлтерҫĕ.

„Ленин ҫулĕпе"... пĕр 70 строкkаллă калав. Калав ытла та пĕҫĕк, анҫах „ахах пĕҫĕкĕ" те... теҫҫĕ ҫăвашсем, ҫак калав та ҫавăн пекех.

Ҫырнă ҫухне Малинниккăв, ытписем йевĕрлĕ, пелкеме йуратмасҭ. Унăн кашни сăмахĕ, ĕҫ ўсĕе пыснине кăгартаĭ.

Калавăн „тĕпри лаша" вырăвҫе ĕлĕк ҫиркў старăстинҫе пурăннă Ептрей тăраĭ. Ĕҫĕ Ленин вилни ҫулталăк иртсен пулвă. Ленин вилни ҫулталăк ҫитнине асăнса шкулта „саҫҫетани пуҫланаĭ" унта

— выҫлăк ҫулсенҫе ҫиркўрен ылтан-кĕмĕл йапаласене илсе кайсан Совета пит курайми пулвă.—

— „аслă ывăлĕ Хĕрлĕ Ҫарта салтакра" пурнакансkерне „анну ҫирлерĕ, вилет" „тесе ҫырупа улталаса" киле ҫăннĕ майĕпе ывăлне „тарса килнĕ ҫухне, ҫул ҫинҫе шăнса ҫирлесе" вĕлерттерекен, „Совета тата хытăрах курайми" пулвă Ептрей те пулаĭ.

„Саҫҫетани уҫăлҫĕ. Партшкулта вĕренекен аҫа Ленин пурнăҫĕ ҫинҫен калама пуҫларĕ. Ептрей пиҫе ҫынсем хушшинҫе кулкаласа кăна лараĭ".

— Ха!... Ленин сопрани пуҫлăхĕ, сопрани те иртерет, хăйĕн шухăшĕсене ҫыраĭ, ҫав хушăрах итлеме хушаĭ, тет. Виҫ тăват ĕҫ срасу тăваĭ епиин, епĕ ултă ҫиҫĕ ĕҫ срасу тăватăп та, ҫапах та шарламастăп!... тет Ептрей.

Ленин ҫинҫен калаванĕ „Кам аҫи? Урпа Петĕрĕн кĕтўҫ аҫи, анҫах кĕтўҫ пулсан та, пурте итлеҫҫĕ, ытла ҫаплă, тикĕс каласа кăгартаĭ вăл".

— „Ептрей пиҫен вуҫах та итлес килмест пуҫ те, анҫах хăлхи илтет (итлĕр ҫыракансем С. М.), мĕн тăвас? Кайарахран тем пулҫĕ: (итлĕр, итлĕр!) Ептрей пиҫе ытписенҫен те хытăрах итлеме пуҫларĕ. Хăш сăмахсем Ептрей пиҫен ҫăринех кайса лекеҫ пулас, вăл пĕр шавламасăр, сиккеленмесĕр итле пуҫларĕ, пĕр сăмахне те итлемесĕр йулмасҭ".

— „Такам та: Ептрей пиҫене мĕн пулҫĕши, тесе шухăшларĕ пуҫ".

Ҫăнах та, ҫак темиҫе строкка пире ҫын улшăннине пит уҫҫăн кăгартаĭ. Совета тем пек курайман Ептрей кĕтўҫ аҫи сăмахне мĕншĕн тимкерсех итлеме пуҫланăка? Мĕншĕн вăл „пĕр самантра" тепĕр ҫын пулса тăнă? Ҫак ыйтăва хирĕҫ калас пулсан ҫăннипех те ҫыракан пулмалла.

Паллах ĕнтĕ, Совета курайман ҫынсем хушшинҫе ҫавăрăнкаласа ҫўрекен Ептрей (ҫиркў старăсти пулнăскер) Совета йуратма пултарайман. Ептрей комсомол йаҫейккин, партти йаҫейккин пуххисене ҫўресех курман. Апла пулсан, „кĕтўҫ аҫи" ҫăварĕнҫен виҫкĕн, вирлĕн тухакан ҫĕнĕ шухăшсем ăна „пĕр шавламасăр, сиккеленмесĕр" ларса итлеттереҫҫĕ. Сăмахсене итленĕ хыҫҫăн вăл, акăҫрен мар, ҫăререн:

— Ҫăн сан сăмахусем, ҫăн—ĕлĕк епĕр ҫапла... пире ĕлĕк унтан та, кунтан та хĕсĕрлеҫĕҫ, тетерет.

Ку сăмахсем, хресҫен хушшине тата ытларах совпартшкулсенҫе вĕренекен „кĕтўҫ аҫисен" сăмахĕсене ҫитересси, сарасси кирлине пĕлтереҫҫĕ. Ку ĕҫ пĕҫĕк ĕҫ мар вăл, ҫавăнпа та Комунисен партти „йалалла" тенĕ лосунка пурнăҫа пит ҫирĕппĕн кĕртсе пыраĭ. Хресҫен хушшинҫе „кĕтўҫ аҫисен" сăмахĕсем йепле улшăнусем тума пултарнине Малинниккăв пĕҫĕк йапаларах уҫҫăн кăтартса параĭ. Ҫавăнпа та Малинниккăвăн пĕҫĕк калавĕ хăватлă калав.

„Кĕтӳç аҫин“ сăмахĕ Ентрейсене (Советăн ирĕксĕр (невольная) тăшманĕсене) хăйсем çине çавăрăнса пăхса, ĕлĕкхипе хаҫхи самансене танлаштарса пăхма пулăшасçĕ.

Ахаҫтен мар Ентрей „хăйĕн пурнăçĕ йенне çавăрăнса пăхрĕ. Пĕтĕм пурнăç кĕтессисене çутатса пăхрĕ те, хаҫхи пурнăçпа танаштарҫĕ. Аса илҫĕ вăл: кулаваĭ татайманнишĕн, пĕр çирĕм пусшăн роскăпа çирĕм çапнине, ун хыççăн ҫирлĕ асапланса выртнине, аса илҫĕ вăл уретнĕк ун лашине çур хакпа сутнине, аса илҫĕ вырăс (ҫанавнĕкĕсем), тутар хĕсĕрленине, пупсем улталанине. Илтрĕ вăл ĕлĕк патша мĕнле асапра тыгса усранине, аса илҫĕ матруҫра, кăҫакарта выçăллă тутăллă, укçасăр пекех ĕçлесе, асапланса пурăннине“.

Çак аса илни ăна ҫиркӳ старăстинҫе çӳревĕскерне те „ҫăн сăмахусем“ тетереççĕ.

Ун хыççăн вăл, хăйĕн хут вĕренекен Ваçили йатлă ывăлĕ комсомола çырăнма шухăшланине илтсен, ăна вĕренме пăрахтаракан, „кĕтӳç аҫи“ комсомола çырăнма ҫĕнĕ хыççăн хăйĕн аҫине:

— Ваçили, Ваçук! çырăн, аҫам, çырăн. Сан аçу ку таравҫен суккăр пулнă, пайан унăнне куçĕсене уçрĕç, çырăн, çырăн. Ленин калана пек ĕçле. Ленин сăмахĕсене ан ман, çирĕп пыр малалла Ленин çулĕпе,— тесе хурат.

Пирĕн çыракансен çак Малинникăв çине пăхса çырма вĕренмелле (вырăсливе те манмалла мар), Малинникăва малашне те ҫăваш ĕçкалăхне çакăн пек йапаласем тата нумайрах çырса пама сĕнетпĕр Капиталисăмран комунисăма куçнă вăхăтри улшăнусене хут çине ӳкерсе пымалла пирĕн. Ҫăваш хушшинҫе çав улшăнусем йепле пулса пынине ҫăваш çыраканĕсен ӳкерсе пыма пĕлмелле.

---

# ХИСЕПЛĔ РЕТАКТĂР!

Çак сăмахсене хаçат çине çаптарма ыйтатăп. „Сунталăн“ 11-мĕш № рĕнҫе Хумма Çеменĕ «Çурлан» 1922 (!) çулги „Нарспи“ çинҫен çырнă ретсенçине çаптарнă. Тĕлĕвмелле! çуралаҫҫен кĕпине çĕлевĕ, вилиҫҫен тупăкне хатĕрленĕ! Пйессине çаптарман та ха, Хумма Çеменĕпе Çурла вуласа та курман, анҫах „ĕлĕк авал“ таçта курнине аса илсе мана вăрçаççĕ, çитменнине виçĕм çул «Куракан» (Петров?) № ран урăх нимĕвех те калайман.

Мĕншĕн çав «ăнăçсăр инстсенировкă» çинҫен татах виçĕ çул иртсен çырмалла пулнă-ши? Ретаксиве çаптарма ыйтман, Хумма Çеменне те вуласа пăхма паман—мĕншĕн «Сунталăн» пит тарăхсах манăн 1921-мĕш çулти Нарспи «инстсенировкă» çинҫен çаптармалла пулнă-ши? Ие манăн пйессă халăха усала вĕрентме пултарат, йе Ojиппăх «Хуммасемшĕн» хăрушла „писаттĕл“?! Мухтав çут тĕнҫене, епĕ траматурк мар. Кирек мĕн çырнă пулсан çавтарасшăн çунман, «упăр тапăршĕн» конорашĕн касман. Мĕн пурĕ те манăн çапăнни хам йуратман „Икĕ каҫҫă“ йатлă пйессă çех, ăна та халăх килĕштернипе çех «Сунтала» йанă. Криттиклес тесен, вăл криттĕксĕн ăсне ватмаллăх та çук—ун çинҫен çанăнпа малтанах каласа хурам (вăл «Хуммасемшĕн» хăрушла мар).

Епĕ кунта «Çурла» çинҫен нумай çырмастăп, мĕншĕн тесессĕн увăн «криттикки» ытлашши те кивелнĕ, вăл çырнăранпа манăн «Нарспи»—çапăнмизнескер темиçе хут та улăшăннă. Пйессин йĕрки йулашки вăхăтра акă çапла пырат: пĕрремĕш картинра урамра пĕҫик аҫасен вăййи, вара каҫҫăсемпе хĕрсен вăййи: Нарспи йепле вăйăхран тавăрăнни те куранат т. ыт. —«Çурлан» çуркуннехи вăйăсем.

Туйĕ Михетерĕн кил картинҫе иртет, Тăхтаман патĕнҫе туй мар—ҫăнахах та ĕçкĕ çех иртет, «Çурла» таçта 1920-мĕш çулта куриппех çырмалла мар.

Нумай çырсан нумай тейĕç, сахал сăмахпа нимĕн каламаçук. Криттĕклес тесен кăлтăксем кирек мĕнле пйессăра та нумай, манинҫе те çавах. Çавăнпа йепле те пулсан 1921-мĕш çулта ҫăвахах та каскаса çырнă пйессăна çаптарасшăн епĕ ку таранҫҫен тăрăшман, малалла та çаптарма Хумма Çеменĕн-

ӡен ыйгмăп. Йулашкинӡен (калăнă каланах) «Сунтал» çинӡен пĕр ик сăмах. Хумма Çеменĕ тимĕрле кÿрснĕ статйа халăхă кирлĕ-ши, кирлĕ мар-ши? Тахçан Осипăп «Канашра» тивĕçсĕр (!) «кăшкăрнине» аса илсе (Хумма Çеменне йÿçĕрех лекнĕ пуӡ) виçĕ çул иртсен çаптарма кама кирлĕ пулнă-ши? Пйес ине вуламан-курман сыхсем ăнланĕç-ши ăна? Йе маншăнах хута сайă йамалла пулнă ши?

Йулашкинӡен «кăшкăрсах кăшкăрнăши» вара епĕ Хумма Çеменĕ. Тен тивĕçлипек кăшкăрнă? Тага 1922 мĕш çулгах манăн пиессă виçĕ пайлă мар, пиллĕклĕ теменӡĕ-ши вăрă епĕ?—Икĕ пайне вăрласа криттиклеймен шĕн епĕ айăплăши? Тага йулашкинӡен «Çурла» статйине Хумма Çеменĕ кăшт улăштарса çырмаи-ши? 1922 мĕш çулга ӡăваш театтăрĕ кĕтме пулгарнă-ши мана? Кăçалхи шухăш кĕрсе ÿкменши Çурла статйине? Оççиппăв.

РЕТАКСИРЕН. Пирĕн ӡăвашла çырнă просветенисене криттĕклеви пит кирлине хирĕç нимĕн те калама çук. „Çурла“ криттĕкĕ ĕлĕкхине тивет пулсан та, унта йăнăшсем пулнă пулсан та, тата криттĕклевсем те таçтан ĕлĕкхиве туртса кăларса çапнă пулсан та, ушăн çиллейсех, «урăх çырмăп» темех каламалла мар. П. Оççиппăв ӡăваш хушшинӡи паллă траматтурк иккене ретакси лайăхах пĕлсе тăрать, ун пек траматтурксем пирĕн хаӡӡен çукрах-ха. Криттĕкленĕшĕн Оççиппăв йулташ «çырма пăрахап» тесе калани пĕрре те килĕшмест. Ӡăваш литтераттурине тунă ĕçре кирек-камăн та йăнăшсем пулаççех.

---

# «Сунтал» ретаксине маттериалсем йанă йулташсене.

САВĂСЕМ:

Çакăнта кăгартнă сăвăсем техниккă йенӡен йе тата ăшӡикки йенӡен те килĕшеймен пирки «Сунгала» кĕреймеççĕ.

Николайĕв Т.—Хурлăхан; Носова—6 сăвă; Есмелçин—1871 çул; Саратон.—Ирĕклĕх; Шăпӡăк.—Ĕлекенпе хресӡен; Çеленков И.—Мухтав ĕçхалăхне, Тоçи шывĕ тăрăх; Шăпӡăк.—Суркурн ӡастушкисем; Йурийĕв М.—Ишекре Кшарни кун, Ĕçкĕ çикĕ; Шăпӡăк В.—Хĕлле пулни; Крупский Ф.—Хĕр сăвви; Çамрăк.—Тăван йала асăнса; Йалти çамрăк; Тимах. М.—Çамрăк ĕмĕр; Сана пĕлекен.—С. М. Макçимăва; Ĕçмĕлсем.—Мăн кăрлаӡăн 17-мĕш кунĕ; Вăрман кассем—Шыв хĕррине ансассăн ура йĕлейместĕр пулмасть, тет; Шăнкăрав.—Хĕвел тухрĕ; Октăпренок—Çуллахи ир, Çуллахи вăрман; Курка—Вĕренни хак; Рсай—Вĕренÿре; Митта Ваçлейĕ—Хресӡен кан; Итихвейĕв—Телейсĕр Ваӡук. Хусанкай—Иурă, Çуралнă çĕр-шывра, Иантра, йантра кĕслемçĕм... Шаланкă—Тăван сăвва, Хăшне сăвва пуç тайас, Тăлăх аӡан сăмахĕсем; Уç—Ӡăваш сăвви, „Кăрлаӡăн 9 мĕшĕ“ пирки ретаксине кĕрсе тухма ыйтатпăр.

КАЛАВСЕМ:

Аттай М.—„Пинтен пĕри“; Анис П.—„Иатурпа мăкăр“; Ӡеӡек—«Вата йамра»; Ефремăв А.—„Релисатсă“, „Выртмара“, Хураçка Х.—„Хă ушă кунсем“; çак калавсем литтераттурă тĕлĕшĕнӡен çитменлĕхсем нумай пирки кĕреймеççĕ.

Кераççимăв И.—„Епĕ курни“. „Сунтала“ кĕреймест, кĕнеке кăларакан уйрăма паратпăр.

СТАТЙАСЕМ:

Пинер—„Канаш сойусĕ çинӡен“. Есĕ тапратнă ыйтăва „Канаш“ сойусăн Шупашкарти ӡленĕсем тĕплĕ сÿтсе йавнă. Хутар В.—Пиплиокрафи—Ун çинӡен „Канаш“ çинӡе пулнă. МАПП Çумĕнӡи Ӡăваш секцине—„Сунтал“ пĕӡĕкленнĕ пирки Ваçанкка й токлагне кÿртеймесгпĕр. Титтова К.—„Ӡăваш литтераттури пирки“ кайаймасть.

# Тупмалли.

Стр.

М. Сейфулина—Мушиксем Ленин ҫинҫен калакан йумах . . . . 1.

Уйӑп—Ленин мавсолейӗнҫе . . . . . . . . . . . . . . . . . . . 6.

Патман—Мӗншӗн? (Калав) . . . . . . . . . . . . . . . . . . . 7.

Елкер С.—Хӗнхур айӗнҫе (Историлле поемӑн малалли сыпӑкӗсем) 17.

Солӑттӑв А.—Ҫӑваш историнҫи паллӑ сйес . . . . . . . . . . 23.

Хусанкай—Н. И. Уҫ поета сумӑ суса . . . . . . . . . . . . . 27.

КРИТТӖККӐ ПАЙӖ:

Солӑттӑв М.—И. Алекҫейӗв „Йурлама вӗренекен“, Малинниккӑв „Ленин ҫулӗпе“ . . . . . . . . . . . . . . . . 28.

Ретаксине килнӗ ҫыру . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . 31.

Пуштӑ йешҫӗкӗ . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . 32.

---

Ответств редактор Ар. Золотов.

Чувашлит № 434. Чебоксары, тип. «Чувашская Книга» Тираж 2500


КАНАШ